Библиотека им. М. Горького

ПЕТЕМ ТЕНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПЕРЛЕШЕР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула депутатĕсĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул
Апрель
22
ЮНКУН
№ 80 (8989)

36-мĕш çул тухать.
Хакĕ 20 пус.

Сывă пултăр Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ—коммунизм тăвассишĕн кĕрешес ĕçре совет халăхне çул кăтартса, ертсе пыракан аслă вăй!

(КПСС Центральнăй Комитечĕ Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе чĕнсе каланисенчен).

КПСС Центральнăй Комитечĕ 1953 çулхи Майăн 1-мĕшĕ ячĕпе

ЧĔНСЕ КАЛАНИСЕМ

1. Сывă пултăр Майăн 1-мĕшĕ—пĕтĕм тĕнчери ĕççыннисем пĕр кăмăллине кăтартмалли кун, мĕнпур çĕршывсенчи рабочисен тăванлăх кунĕ!

Пролетарилле интернационализм ялавне çулерех çĕклер!

2. Сывă пултăр халăхсем хушшинчи мир!

Интересленекен çĕршывсем пĕр-пĕринпе калаçса татăлнă тăрăх мирлĕ йĕркепе татса пама май килмен е татса парайман тавлашуллă ыйту çук!

3. Мĕнпур çĕршывсенчи ĕççыннисем! Мире сыхласа хăварас ĕçе халăхсем хăйсен аллине илсен тата вĕсем ăна вĕçне çитиех хŷтĕлесе тăрсан, мир сыхланса юлĕ тата тĕрекленĕ! Миршĕн кĕрешес ĕçре халăхсен пĕрлĕхне çирĕплетĕр, миршĕн тăраканскен ретне нумайлатăр тата пĕтĕçтерĕр!

4. Халăх демократи çĕршывĕсенчи ăнăçлăн социализм тăвакан ĕççыннисене тăванла салам!

Сывă пултăр та тĕреклентĕр халăх демократи çĕршывĕсемпе Совет Союзĕ хушшинчи никам çĕмĕрейми туслăх тата пĕр-пĕринпе тачă çыхăнса ĕçлени!

5. Аслă Китай халăхне, халăхăн демократиллĕ хăватлă Китай государствине тăвас ĕçре çĕнĕ çитĕнŷсем тунă халăха, тăванла салам!

Тĕреклентĕр те чечеклентĕр Китай Халăх Республикипе Совет Союзĕ хушшинчи аслă туслăх—Инçет Хĕвелтăхăçĕпе пĕтĕм тĕнчери мирпе хăрушсăрлăхăн çирĕп тĕрекĕ!

6. Паттăр Корея халăхне, хăйĕн Тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешекен халăха, тăванла салам!

7. Хăвăртрах мирлĕ договор тăвассишĕн, пĕрлĕхлĕ, никама пăхăнман, мире юратакан демократилле Германишĕн кĕрешекен Германи халăхне салам!

8. Нацилле ирĕклĕх туса хурассишĕн, никама пăхăнман, демократилле тата мире юратакан Японишĕн паттăр кĕрешекен Япони халăхне салам!

9. Колонилле çĕршывсемпе пăхăнса тăракан çĕршывсенчи халăхсене, империализм пусмăрне хирĕç, хăйсен ирĕклĕхĕпе нацилле никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешекен халăхсене, тăванла салам!

10. Англири, Америкăри Пĕрлешŷллĕ Штатсенчи тата Совет Союзĕнчи халăхсен вăрçа сирсе ярассишĕн, пĕтĕм тĕнчере çирĕп мир туса хурассишĕн кĕрешес ĕçри туслăхĕ сывă пултăр!

11. Сывă пултăр Совет Союзĕн тулашри политики—мире сыхласа хăвармалли тата тĕреклетмелли, çĕнĕ вăрçă кăларма хатĕрленнине хирĕç кĕрешмелли политика, тĕнчери халăхсемпе килĕштерсе ĕçлемелли тата мĕнпур çĕршывсемпе ĕçлĕ сыхăнусем тытмалли политика!

12. Миршĕн, демократишĕн, социализмшăн, çĕнĕ вăрçă чĕртсе яракансене хирĕç кĕрешекен мĕнпур халăхсене тăванла салам!

13. Совет воинĕсем! Хăвăрăн çар тата политика тĕлĕшĕнчи пĕлŷсене çине тăрса ŷстерсе пырăр, хăвăрăн боевой ăсталăха ŷстерĕр! Социализмла государствăн оборона хăватне ывăнма пĕлмесĕр тĕреклетĕр!

Мире тата пирĕн Тăван çĕршывăн хăрушсăрлăхне сыхласа тăракан Совет Союзĕн Хĕçпăаллă Вăйĕсене мухтав!

14. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Коммунистсен партийĕпе Совет Правительстви тавра тата тачăрах пĕтĕçĕр, хамăрăн вăйсемпе творчествăлла пултарулăха хамăр çĕршывра коммунизм тăвас аслă ĕçе мобилизацилер!

Коммунистсен партийĕ, Совет Правительстви тата халăх хушшинчи çирĕп пĕрлĕх сывă пултăр!

15. Совет Союзĕнчи рабочисем, колхозниксем, интеллигенци! Партипе Правительство туса хатĕрленĕ политикăна, пирĕн социализма Тăван çĕршыв хăватне малалла тĕреклетмелли тата халăх пурнăçне пĕрмаях лайăхлатса пымалли политикăна пурнăçа кĕртессишĕн активлă кĕрешĕр!

16. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Рабочи класпа колхоз хресченĕсем хушшинчи никам çĕмĕрейми союза, пирĕн çĕршыври халăхсем хушшинчи тăванла туслăха тĕреклетĕр! Нумай нацилле аслă Совет государствин пĕрлĕхне ывăнма пĕлмесĕр çирĕплетĕр!

17. Совет гражданĕсен прависене, хамăрăн Конституцине çирĕплетсе пана правасене, никам та тĕкĕнме пултараймасть, вĕсене Совет Правительстви çирĕп хŷтĕлесе тăрать.

Сывă пултăр Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Конституцийĕ!

18. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! ССР Союзне аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн пĕтĕм халăхăн социализмла ăмăртăвне тата анлăрах сарап! Халăх хуçалăхне çĕнĕ хăватпа çĕклентерессишĕн, халăхăн материальнăй пурнăçĕпе культурине малалла ŷстерессишĕн кĕрешĕр!

19. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Ĕç тухăçлăхне пĕрмаях ŷстерсе пырăр! Производство резервĕсене уçса палăртăр, вĕсемпе анлăн усă курăр, тирпейлĕх режимне çирĕп тытса пырăр! Туса кăларакан продукци пахалăхне лайăхлатăр, унăн хăйне ларакан хакне йŷнетĕр!

20. Çĕр кăмăк промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Çĕр кăмăк кăларассине ŷстерĕр, çĕнĕ шахтăсем хăвăртрах туса ĕçе кĕртĕр! Çĕнĕ машинăсемпе механизмсене ытларах ĕçе кĕртĕр! Халăх хуçалăхне пысăк пахалăхлă çĕр кăмăк ытларах парар!

21. Нефть промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Нефть кăларма çĕнĕ шăтăксем паралас, çĕнĕ промысласемпе нефтьрен тĕрлĕ продуктсем хатĕрлекен заводсем тăвас ĕçĕн хăвăртлăхне ŷстерер! Халăх хуçалăхĕ валли нефть тата нефтьрен тунă пысăк пахалăхлă продуктсем парар!

22. Электростанцисемпе электропромышленноçри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Энергетикăн çĕнĕ хăвачĕсене хăвăртрах ĕçе кĕртĕр! Халăх хуçалăхĕн ŷссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерме электроэнергипе электротехника оборудованийĕ татти-сыпписĕр парса тăрăр!

23. Совет металлургĕсем! Металлурги тата сăрт-ту предприятийĕсен хăвачĕсемпе усă курассине лайăхлатăр, производство процессĕсене механизацилессине тата автоматизацилессине аталантарса пырăр! Малта пыракан ĕç меслечĕсемпе анлăрах усă курăр! Çĕршыва чугун, хурçа, прокат, тĕслĕ металсем ытларах парар!

24. Машинăсем тăвакан предприятисенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Çĕнĕ йышши машинăсем, приборсем тата оборудовани тăвас ĕçе хăвăртрах вĕренсе çитĕр, вĕсене нумайрах туса кăларăр, вĕсен пахалăхне лайăхлатăр! Машинăсем тăвас ĕçе—СССР халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене техника енĕпе хăватлăн малалла илсе пымалли никĕсе—пысăк хăвăртлăхпа аталантарар!

25. Хими промышленноçĕнчи работниксем! Минерал удобренисем тата халăх хуçалăхĕ валли ытти йышши хими продукчĕсем туса кăларассине ŷстерĕр! Хими заводчĕсем туса кăларакан продукци пахалăхне лайăхлатăр!

26. Строительствăри тата строительство материалĕсем тăвакан промышленноçри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Çĕнĕ предприятисем, пурăнмалли çуртсем, шкулсемпе больницăсем хăвăртрах туса ĕçе кĕртĕр! Строительствăра индустрилле меслетсемпе, механизмсемпе лайăхрах усă курăр! Строительство хакне йŷнетĕр, строительство пахалăхне лайăхлатăр! Хамăрăн Тăван çĕршыв стройкисем валли строительство материалĕсем ытларах парар!

27. Вăрманпа хут промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Ĕç тухăçлăхне ŷстерсе пырăр, механизмсемпе туллин усă курăр! Продукци пахалăхне пур майсемпе те лайăхлатăр! Çĕршыва йывăç материалсем, хут, сĕтел-пукан нумайрах туса парăр!

28. Çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Куллен кирлĕ таварсен пахалăхне лайăхлатăр, вĕсен ассортиментне нумайлатăр! Чĕртавара перекетлĕр, продукцин хăйне ларакан хакне йŷнетĕр! Совет халăхĕн ŷссе пыракан материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтерме промышленность таварĕсемпе апат-çимĕç ытларах туса кăларар!

29. Совет транспортĕнчи работниксем! Чугун çулсем тăрăх поездсем ытларах çŷретмелле тăвассишĕн кĕрешĕр! Пăравуссемпе, вагонсемпе, автомашинăсемпе усă курассине пур майсемпе те лайăхлатăр! Грузсем нумайрах турттарăр, вĕсене турттарма ларакан хака йŷнетсе пырăр! Пассажирсемшĕн лайăхрах тăрăшăр! Чугун çулпа автомобиль транспортне лайăх ĕçлеттерĕр!

30. Сыхăну работникĕсем! Сыхăну техникине вăйлатса тата лайăхлатса пырăр! Почта, телеграф, телефон, радио ĕçĕн пахалăхне лайăхлатăр! Халăх ыйтăвне лайăхрах тивĕçтерĕр!

31. Тинĕс тата юханшыв флочĕн работникĕсем! Халăх хуçалăхĕ валли грузсем хăвăртрах çитерсе парăр! Грузсем турттарассине ŷстерĕр, суднăсен çаврăнăшне хăвăртлатăр, портсен тата суднăсем юсакан заводсен ĕçне лайăхлатăр! 1953 çулхи навигацие кăтартуллă ирттерессишĕн кĕрешĕр!

32. Социализмла çĕрçĕпе выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксем! Мĕнпур ялхуçалăх культурисен тухăçне малалла ŷстерсе пырассишĕн, обществăлла выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне ŷстерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешĕр! Çĕршывра ялхуçалăх продукчĕсем питĕ нумай пулмалла тăвар!

33. Колхозниксемпе колхозницăсем! Çĕршыври мĕнпур колхозсене малалла çĕклентерсе тата чечеклентерсе пырăр! Обществăлла хуçалăха тĕреклетессишĕн тата нумай енлĕн аталантарассишĕн, колхозсемпе колхозниксен тупăшне ŷстерессишĕн кĕрешĕр! Ялхуçалăх артелĕн Уставне—колхоз пурнăçĕн тĕп законне çирĕп пурнăçласа пырăр!

34. Совет суту-илĕвĕн работникĕсем! Хуласемпе ялсенче апат-çимĕç тата промышленность таварĕсемпе сутуилŷ тăвассине вăйлатăр, магазинсен, дĕрлешŷллĕ апатлану предприятийĕсен шутне ŷстерсе пырăр! Совет потребителĕн ыйтăвĕсене лайăх тивĕçтерĕр!

35. Государство учрежденийĕсенчи служащисем! Совет аппарачĕн ĕçне лайăхлатăр, государство дисциплинине çирĕплетĕр, социализмла законлăха çирĕп пурнăçласа пырăр, ĕççыннисен ыйтăвĕсем çине сисĕмлĕ пăхăр!

36. Наука учрежденийĕсемпе аслă шкулсенчи работниксем! Совет наукине малалла аталантарса пырăр! Наука ĕçĕнчи çитменлĕхсене критиклессине хăюллăн сарса пырăр! Наукăпа производство хушшинчи сыхăнăва çирĕплетĕр, халăх хуçалăхĕ валли специалистсем хатĕрлессине лайăхлатса тата сарса пырăр!

37. Литературăпа искусство работникĕсем! Хăвăр творчествăн идейăпа художествăлла шайне ŷстерĕр! Пирĕн аслă халăха тивĕçлĕ произведенисем туса парăр!

38. Халăха вĕрентес ĕçри работниксем! Шкŷлти вĕрентŷпе воспитани ĕçĕн пахалăхне лайăхлатăр, вĕренекенсене наука никĕсĕсене пĕлнипе хĕçпăаллантарăр! Социализмла обществăн культурăллă, нумай вĕреннĕ гражданĕсене, коммунизмăн активлă строителĕсене вĕрентсе хатĕрлĕр!

39. Медицина работникĕсем! Халăх сывлăхне сыхлас ĕçе лайăхлатса, вăйлатса пырăр, сывлăхпа санитари учрежденийĕсен ĕçĕнчи культурăна хăпартăр! Медицина наукин çитĕнĕвĕсене практикăра пурнăçласа пырăр!

40. Совет хĕрарăмĕсем! Пирĕн аслă социализмла Тăван çĕршывăн экономикипе культурине малалла чечеклентерессишĕн кĕрешĕр!

Сывă пулччăр совет хĕрарăмĕсем—коммунизмăн активлă строителĕсем!

41. Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Çамăрксен Ленинла Коммунистла Союзĕ — коммунизм тăвакан çамăрксен малта пыракан отрячĕ, Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн активлă помощникĕпе резервĕ!

42. Сывă пулччăр коммунизм шкулĕ пулса тăракан совет профсоюзĕсем!

43. Совет çамăркĕсем! Наукăна, техникăна, культурăна вĕренсе пырăр! Ленинăн—Сталинăн аслă ĕçĕн çĕнтерĕвĕшĕн пыракан кĕрешŷре чăтăмлă та хăюллă пулăр! Тăван çĕршыв хăватне хăвăрăн паттăр ĕçŷсемпе тĕреклетĕр, совет халăхĕн коммунизм строительствинчи çитĕнĕвĕсене ŷстерĕр!

44. Коммунистсемпе комсомолецсем! Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана тултарассишĕн тата ирттерсе тултарассишĕн, Совет Союзĕнче коммунизм тăвассишĕн кĕрешекенсен малти речĕсенче пырăр!

45. Сывă пултăр аслă Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕ — пирĕн çĕршыври халăхсен туслăхĕпе мухтавĕн никĕсĕ, пĕтĕм тĕнчери мирĕн никам аркатайми çирĕп тĕрекĕ!

46. Сывă пултăр Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕ—коммунизм тăвассишĕн кĕрешес ĕçре совет халăхне çул кăтартса, ертсе пыракан аслă вăй!

47. Ленин—Сталин ялавĕ айĕнче, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, малалла — коммунизм çĕнтерĕвĕ патне!

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн

Центральнăй Комитечĕ.

Марксизм-ленинизм теорине пуянлатнă чаплă произведени

И. В. Сталин çырнă „ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем" ятлă произведенĕ чăвашла пичетленсе тухнă май

И. В. Сталин çырнă «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă классикла произведени пичетленсе тухни пирĕн Коммунистсен партипе совет çыннисен идейăлла пурнăçĕнче калама çук пысăк событи пулчĕ.

Сталин юлташăн çак пахa произведенийĕ марксизм-ленинизм экономика çинчен вĕрентнине гениллĕ малалла аталантаракан произведени пулса тăрать, çав вăхăтрах вăл марксистла-ленинла политикăлла экономи аталанăвĕн чи çўлти пусăмĕ пулать.

Марксистла-ленинла политикăлла экономи обществăн материальнăй пурнăçĕ улшăнса пынă май аталанса пынă тата аталанса пырать те.

К. Маркс «Капитал» ятлă произведенире буржуази обществине аталантарса пыракан экономика законĕсене тĕплĕн тĕпчесе тухнă, çапла вара вăл рабочи класа капитализма хирĕç кĕрешме, коммунизм çĕнтерессишĕн кĕрешме вĕрентнĕ.

В. И. Ленин «Империализм — капитализмăн чи çўлти сыпăкĕ» ятлă кĕнекере, Марксăн экономикăлла вĕрентĕвне тĕпе хурса, монополиллĕ капитализм аталанăвĕн уйрăмлăхĕсене тата ăна тивĕç закономерноçсене пур енчен те тĕпчесе тухнă, унăн историллĕ вырăнне кăтартса панă.

В. И. Ленин, экономикăпа политика тикĕс мар аталаннин законне тĕпчесе тупса, уйрăм илнĕ пĕр çĕршывра социализм çĕнтерме пултарни çинчен гениллĕ вывод тунă, çапла вара пĕтĕм тĕнчери пролетариата социализмла революцин çĕнĕ теорийĕпе хĕçпăшаллантарнă.

И. В. Сталин, марксистла-ленинла теорие творчествăлла аталантарса пырса, пирĕн çĕршывра коммунизм обществи тума май пуррине кăтартса панă. Вăл хăйĕн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенийĕнче, Марксăн Ленин вĕрентни çине таянса, Совет Союзĕнчи коммунизм строительствинчи пысăк опыта пĕтĕçтерсе, социализмăн экономикăлла законĕсене гениллĕ тĕпчесе тухнă, совет экономики аталанăвĕн наукăлла никĕсĕсене палăртса панă, социализмран коммунизма майĕпен куçса пымалли çулсене кăтартса панă.

И. В. Сталин тĕпчесе тупнисем, çак кĕнекере çырса панăскерсем, пĕтĕм тĕнчешĕн историллĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вĕсем коммунистсемпе рабочи партисене, мĕнпур ĕçсыннисене империализма хирĕç, миршĕн, демократишĕн тата социализмшăн кĕрешмелли çулсемпе меслетсене кăтартса параççĕ.

Сталин юлташ хăйĕн классикла произведенийĕнче, революциллĕ теорипе революциллĕ практика нихçан уйрăлми пĕрлешсе тăнине чаплăн кăтартса параканскерĕнче, экономикăлла теорин тĕп ыйтăвĕсене кăларса татса панă, социализм обществинче обществăлла производство законĕсемпе материальнăй пуянлăхсене валеçес законсем мĕнле пулнине пур енчен те тĕпчесе тухнă, социализмран майĕпен коммунизма куçмалли çулсене кăтартса панă.

* * *

Марксистла-ленинла экономикăлла наукăна творчествăлла аталантарса тата ăна пуянлатса, И. В. Сталин политикăлла экономи науки мĕнле ыйтусене тĕпчесе вĕренни çинчен çав тери тĕплĕ каласа татса парать, политикăлла экономи ĕçсыннисен пурнăçĕнче мĕнле пысăк вырăн йышăнса тănине кăтартса парать.

Политикăлла экономи, марксистла-ленинла наукăн паллăрах пайĕ пулса тăраканскер, чи малтанах обществăн экономикăлла стройне, çынсен производствăлла, экономикăлла хутшăнăвĕсене тĕпчесе вĕренет.

Производствăлла хутшăнусен ăшчикки çаксем пулса тăраççĕ: пĕррремĕшĕнчен, производство хатĕрĕсен харпăрлăх формисем, иккĕмĕшĕнчен, тĕрлĕ социаллă ушкăнсен çакăнтан килекен производствăри вырăнĕ тата вĕсен пĕр-пĕрин хушшинчи хутшăнăвĕсем, виççĕмĕшĕнчен, продуктсем валеçсе тăрассин формисем. Çаксем пурте пĕрле политикăлла экономи тĕпчекен ыйтусем пулса тăраççĕ, тесе вĕрентет Сталин юлташ.

Пулă-пулми марксистсене хытă критиклесе, И. В. Сталин политикăлла экономи мĕнле те пулин пĕр обществăлла формацин экономикăлла аталанăвĕн законĕсене мар, тĕрлĕ обществăлла формацисен экономикăлла аталанăвĕн законĕсене тĕпчесе вĕренет, тесе кăтартса парать.

Сталин юлташ социализмăн политикăлла экономийĕ тĕпчесе вĕренекен ыйтусене пирĕн ертсе пыракан органсен хуçалăх политикин ыйтăвĕсемпе пăтраштарма юраманни çине кăтартса парать. Вĕсем икĕ тĕрлĕ япала пулса тăраççĕ. Политикăлла экономи çынсен производствăлла хутшăнăвĕсен аталанăвĕн законĕсене тĕпчесе вĕренет. Хуçалăх политики çакăнтан практикăра кирлĕ выводсем тăвать, вĕсене конкретлăрах туса, вĕсем тĕрĕх хăйсен кулленхи ĕçне туса пырать.

Политикăлла экономи, пирĕн кадрсене социализм обществин аталанăвĕн экономикăлла законĕсене пĕлнипе хĕçпăшаллантарса, экономика пурнăçĕнче пулса пыракан ĕçсене малтанах витĕр курса тăма пулăшать, çĕршыва экономика тĕллĕшĕнчен ертсе пырас ĕçе йăнăшсăр туса пыма май парать.

* * *

И. В. Сталин марксистла литературăра чи малтан социализм вăхăтĕнчи экономикăлла законсен объективлă характерлă пулнине [illegible] тĕллĕвĕрпе чĕнсе [illegible].

Марксизм-ленинизм çапла вĕрентет: этем обществи хăйне тивĕçлĕ объективлă экономикăлла законсем тĕрĕх аталанса пырать, вĕсене тĕпчесе пĕлни кивĕс вăхăтра мĕн пуласси малтанах курса тăма май парать. Малаллăха курса тăни — пĕтĕм тĕнчене социализм никĕсĕ çинче çĕнетсе улăштармалли çавăн пекех тата социализм вăхăтĕнчи экономикăлла пурнăçа ăнăçлăн ертсе пыма май паракан чи кирлĕ услови пулса тăрать. Çавăнпа та пролетариат партийĕн хăйĕн практикăлла ĕçĕнче ăнсăртран килсе тухакан шухăшсемпе мар, общество аталанăвĕн законĕсемпе, çав законсенчен тухса тăракан практикăлла выводсем каласа панисемпе усă курмалла, вĕсем çине таянса ĕçлесе тăмалла, тесе вĕрентет И. В. Сталин.

Общество аталанăвĕн законĕсем, экономика законĕсем кирек мĕнле обществăлла стройра та объективлă законсем пулса тăраççĕ, вĕсем, экономикăлла çĕнĕ условисен никĕсĕ çинче пуçланса кайса, явленисен шалти паллăрах сыхăнăвĕсене е обществăн экономикăлла пурнăçĕн, экономика аталанăвĕн процесĕсене, çынсен ирĕкĕнчен килмесĕр пулса пыракан процессене, вĕсен закономерноçĕсене палăртса тăраççĕ. Çав явленисен сыхăнăвĕсене е обществăн экономикăлла пурнăçĕн куллен пулса пыракан процесĕсене тĕпчесе пĕлсе, политикăлла экономи аталанăвăн объективлă законĕсене уçса парать.

Экономика аталанăвĕн законĕсем — çамах капитализм е социализм çинчен пырать-и, вăл пурпĕрех,—экономика условисен никĕсĕ çинче ўссе тухаççĕ. Вĕсене çынсен ирĕкĕпе «пĕтерсе хума» та, «урăхлатса çĕнетме» те çук. Сутçанталăкла обществăри çынсен ирĕкĕнчен килмесĕр пулса пыракан объективлă процесcене палăртса тăракан наука законĕсене çынсен ирĕкĕпе правительствăсем кăларнă законсемпе, юридически вăй кăна илнĕ законсемпе пăтраштарма юрамасть, тесе кăтартса парать И. В. Сталин.

Политикăлла экономи законĕсем пирĕн тулашри объективлă закономерноçсем е экономикăлла пурнăçăн пирĕн ирĕкрен килмесĕр пулса пыракан процесĕсем çынсен пуçĕсенче палăрса тăни пулса тăраççĕ. Çынсем çав законсене тĕпчесе уçма, вĕсене тĕпчесе пĕлме, вĕсене хăйсен ĕçĕнче шута илсе, вĕсемпе общество интересĕсемшĕн усă курма пултараççĕ.

Общество экономика законĕсем умĕнче вăйсăр мар, çынсем экономика законĕсене тĕпчесе пĕлме пултараççĕ тата вĕсем çине таянса вĕсемпе хăйсен интересĕсемшĕн ăнăçлăнах усă курма пултараççĕ, тесе калакан марксистла-ленинла тезис тĕрĕс пулнине пирĕн çĕршыври коммунизм строительстви лайăх кăтартса парать.

Социализм вăхăтĕнче экономикăлла пурнăçра объективлă закономерноçсем пуррине йышăнманни йĕркесĕрлĕхпе ăнсăртлăхсен тĕнчине лекесси, çав ăнсăртлăхсене чуралла пăхăнса тăрасси патне илсе пырать. Вăл политикăлла экономи наука пулса тăнине пĕтерсе хурасси патне илсе пырать. Наукăна пĕтерсе хурса, эпир çĕршывăн экономикăлла пурнăçĕнче ĕçсем мĕнле пулса пырассине малтанах курса тăма пултараймăн пулăттăмăр, урăхла каласан, эпир экономикăна ертсе пырас тĕлĕшпе чи çăмăл ĕçсене те йĕркелесе яма пултараймăн пулăттăмăр, тесе вĕрентет И. В. Сталин.

Çавăнпа пĕрлех общество экономикăлла законсем умĕнче вăйсăр пулса тăмасть, тет И. В. Сталин. Пачах та урăхла, экономикăлла законсене вĕренсе пĕлсе тата вĕсем çине таянса пырса, общество вĕсен ĕçĕн анлăшне пўлме пултарать, вĕсемпе общество интересĕсемшĕн ăнăçлăнах усă курма пултарать. Экономикăлла законсем объективлă законсем пулса тăраççĕ тесе, вĕсене ытлашши пысăка хурса, вĕсем умĕнче пуç таймалла мар. Вĕсем объективлă характерлă пулнине ăнланса илмелле, вĕсене вĕренсе пĕлмелле тата обществăна аталантарса пырас çĕрте вĕсемпе усă курмалла.

Çавăнпа пĕрлех вăл экономикăлла законсемпе çутçанталăк законĕсем хушшинчи уйрăмлăхсене те кăтартса парать.

Пĕрремĕш уйрăмлăхĕ çакă пулать. Çутçанталăк законĕсем обществăпа çутçанталăк аталанăвĕн мĕнпур тапхăрĕсем тăршшипех «ĕмĕрлĕхе» пыракан законсем пулса тăраççĕ пулсан, экономика аталанăвĕн законĕсем вара нумайăшĕ ĕмĕрлĕхе пыракан законсем мар, вĕсем историри пĕр паллă тапхăр хушши кăна, çак обществăлла формацире кăна вăйра тăраççĕ, ун хыççăн вĕсем çĕнĕ законсене, экономикăн çĕнĕ условийĕсен никĕсĕ çинче çуралаканскерсене, вырăн параççĕ.

Экономикăлла законсен тепĕр паллă уйрăмлăхĕ вăл çакă пулать: естествознанире çĕнĕ закона уçса палăртса унпа усă курасси хăшпĕр таран лăпкăн пулса пырать пулсан, экономикăра вара çĕнĕ закона уçса палăртса унпа усă курасси класлă кĕрешў условийĕсенче пулса пырать; мĕншĕн тесен экономикăлла çĕнĕ законсене уçса усă курасси кивĕ строй упраса хăварасшăн тăрăшакан, обществăн пĕтсе пыракан вăйĕсен интересĕсене пырса тивет, çавăнпа та çав вăйсем ăна хирĕç питех те хытă тăраççĕ, кĕрешеççĕ.

Экономикăлла законсемпе усă курасси класлă обществăра яланах тата пур çĕрте те класс интересĕсем хушнă пек пулса пырать. Çавăнпа пĕрлех малта тăракан класс кăна экономикăлла законсемпе яланах тата пур çĕрте те общество интересĕсене кирлĕ пек усă курма пултарать.

Общество вăйĕсен аталанса пытăр тесен, реакциллĕ классен кăмăрĕпе тăрасене сĕнтерме пултаракан малта пыракан вăй тупмалла, экономикăлла çĕнĕ законсене пурнăçра пуç пулса тăма çул уçса памалла. Кивĕ Российăра çавăн пек малта пыракан вăй тупăнчĕ. Çав вăй — рабочи класпа хресченсен союзĕ пулса тăчĕ. Çав вăй, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, пирĕн çĕршывра капитализма сирпĕтсе антарчĕ, социализм обществи туса çирĕплетрĕ.

Кашни обществăлла-экономикăлла формацин хăйне тивĕç экономикăлла законсем пур. Çавăнпа пĕрлех тĕрлĕ обществăлла формацисем хăйсем аталанса пынă чухне хăйсене çеç тивĕçлĕ экономикăлла законсене кăна мар, тата çав обществăлла формацисене пĕр-пĕринпе сыхăнтаракан пĕтĕмĕшле законсене те пăхăнса тăраççĕ.

Экономикăлла пурнăçăн уйрăм енĕсене е уйрăм процесĕсене палăртса тăракан уйрăм законсене пĕрлех кашни обществăлла формацин хăйĕн экономикăлла тĕп законĕ пур. Анчах та экономикăлла тĕп закон кашни формацин пĕрре кăна пулма пултарать. Экономикăлла тĕп закон вăл — çак производство аталанăвĕн мĕнле те пулин уйрăм енне мар, е мĕнле те пулин уйрăм процесĕсене мар, экономика аталанăвĕн мĕнпур тĕп енĕсемпе мĕнпур тĕп процесĕсене палăртса тăракан, çав аталанăвăн ăшчиккине, унăн тупсăмне палăртса тăракан закон пулса тăрать.

Экономикăлла тĕп закон çаксене палăртса парать: пĕрремĕшĕнчен, обществăлла производствăна мĕншĕн туса пынине, унăн сывăхри тĕллевне, ăна аталантарса пыракан вăйсене; иккĕмĕшĕнчен, производствăн тĕп тĕллевне пурнăçлама май паракан меслетсене. Çавăнпа та ĕнтĕ экономикăлла тĕп закон обществăлла строя аталантарса пыракан пур закономерноçсене те ăнланса илме пулăшать.

* * *

И. В. Сталин ку чухнехи капитализмăн экономикăлла тĕп законĕне социализмăн экономикăлла тĕп законне тĕпчесе тупса, вĕсем çинчен тĕплĕн каласа пани марксизм-ленинизм теорине татах та ытларах пуянлатни пулса тăрать.

Ку чухнехи капитализмăн тĕп законĕ çакă пулать: çĕршыври халăхăн ытларахăшне эксплуатацилесе, юхăнтарса тата чухăнлатса, ытти çĕршывсенчи, уйрăмах та кая юлнă çĕршывсенчи халăхсене чуралантарса тата пĕрмаях çаратса, юлашкинчен, вăрçăсем кăларса тата халăх хуçалăхне вăрçă валли ĕçлеттерсе, — çаксемпе пысăкран та пысăк услам илсе ĕçре усă курса, капиталистла чи пысăк услам илмелле тăвасси.

Капитализмла производство тĕллевĕ — услам илесси пулать. Капитализмла производство çыншăн, ăна мĕн кирлине туса кăларассишĕн интересленмест, вăл пĕр усламшăн çеç интересленет.

Ку чухнехи капитализмăн экономикăлла тĕп законĕ производительнăй вăйсемпе общество ĕçлевне çав тери вичесĕр салатса пĕтерсе пырать, çутçанталăк пуянлăхĕсене тустарать, техника ўссе малалла аталанса пырассине чăрмантарать, империализмăн пĕтĕм тĕнчери экономикăлла системи çĕрсе пырассине хăвăртлатать.

Социализм, ăна капитализмпа танлаштарсан, çўлти пусăмра тăракан обществăлла строй пулса тăрать. Унăн хăйĕн экономикăлла тĕп закон пур. Социализмăн экономикăлла тĕп законĕ ку чухнехи капитализмăн экономикăлла тĕп законĕнчен тĕпрен уйрăлса тăрать. Социализмăн экономикăлла тĕп законĕн чи паллă уйрăмлăхĕсемпе вăл хушнисем çаксем пулаççĕ: социализмла производствăна çўлте тăракан техника никĕсĕ çинче вĕçĕмсĕр ўстерсе тата лайăхлатса пырса, пĕтĕм обществăн пĕрмаях ўссе пыракан материальнăй тата культурăлла ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтерсе пырасси.

Социализмăн экономикăлла тĕп законĕ социализм вăхăтĕнче обществăлла производство аталанăвĕ мĕнле тĕллевшĕн пулса пынине тата çав тĕллевсене пурнăçлама мĕнле меслетсемпе усă курнине палăртса парать. Социализмăн экономикăлла тĕп законĕ хăйĕн ĕмĕрне пурăнса иртгерекен капитализмла стройпа танлаштарсан социализмла строй мĕнле пахa та чаплă строй пулнине кăтартса парать. Социализм вăхăтĕнче пĕтĕм япаласене туса кăларасси пĕтĕм общество интересĕсемшĕн пулса пырать. Социализм обществинче мĕнпур япаласене туса кăларасси пĕтĕмпех çыншăн, ăна мĕн кирлине йăлтах памалла тăвас тĕллевпе пулса пырать. «Социализмла производствăн тĕллевĕ услам мар, çын тата ăна мĕн кирли, урăхла каласан, унăн материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтересси пулса тăрать», тесе кăтартса парать И. В. Сталин.

Çапла ĕнтĕ, социализмла производствăн тĕллевĕ—ĕçсыннисен материальнăй тата культурăлла ыйтăвĕсене тивĕçтересси пулса тăрать. Çав тĕллеве пурнăçламалли майсем—чи çўлте тăракан техника никĕсĕ çинче социализмла производствăна пĕрмаях ўстерсе тата лайăхлатса пыни пулать.

Социализмăн экономикăлла тĕп законĕ хушни çине таянса, Совет государстви, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, производительнăй вăйсене тата ĕçсыннисен материальнăй пурнăçне пĕрмаях ўстерсе пырать.

Социализмăн экономикăлла тĕп законне социализм обществин ытти мĕнпур экономикăлла законĕсем пăхăнса тăраççĕ. Çав законсенчен пĕри—халăх хуçалăхне план йĕркипе, пропорци йĕркипе аталантармалли экономикăлла закон пулса тăрать. Халăх хуçалăхне план йĕркипе, пропорци йĕркипе аталантармалли закон пирĕн çĕршывра производство хатĕрĕсене социализмла пĕрлештерни никĕсĕ çинче капитализм чухнехи конкуренцин тата производство анархийĕн законĕ вырăнне тухса тăчĕ. Халăх хуçалăхне план йĕркипе, пропорци йĕркипе аталантармалли закон производство пропорцийĕсене тума хушать. Çав пропорци производство хатĕрĕсем ытларах туса кăларассине государство планĕсем урлă йĕркелесе пыма май парать. Производство хатĕрĕсем туса кăларас ĕçе чи малти вырăна хурса туса пыни пĕтĕм халăх хуçалăхне пĕрмаях тата вăйлăн çĕклентерессин никĕсĕ пулса тăрать.

* * *

И. В. Сталин социализм вăхăтĕнчи таварлă производство çинчен тăракан ыйтăва тата социализм вăхăтĕнчи хаклăх законĕ çинчен тăракан ыйтăва татса пани çав тери пысăк практикăлла вырăн йышăнса тăрать.

Таварлă производство вăл—сутмашкăн тăвакан производство, пасарта сутса-илсе улăштармашкăн тăвакан производство пулса тăрать. Таварлă производство капитализмла производствăран малтанрах пулнă. Вăл, экономикăлла уклад вырăнĕнче, чуралăх стройĕ вăхăтĕнчех пулнă, феодализм вăхăтĕнче те пулнă, вĕсемшĕн ĕçлесе тăнă. Вăл ку чухнехи капитализм обществи вăхăтĕнче те пурăнать. Таварлă производство социализм вăхăтĕнче те пур. Анчах социализм вăхăтĕнчи таварлă производство социализмчченхи таварлă производствăсемпе пĕртте пĕр пек мар. Социализм вăхăтĕнчи таварлă производство ахаль йышши таварлă производство мар, вăл уйрăм йышши таварлă производство, капиталистсемсĕр таварлă производство пулса тăрать. Çакăн пек таварлă производство ку таранччен историре пулман-ха.

Пирĕн таварлă производство уйрăм харпăрлăх çине мар, эксплуатаци йĕркисĕр тата тара тытса ĕçлеттерес йĕркесĕр пулса тăракан обществăлла харпăрлăх çине таянса тăрать; унăн ĕçĕ, тĕпрен илсен, пĕрлешнĕ социализмла производительсен (государство, колхозсем, кооперации) таварĕсемпе çыхăнса тăрать; пирĕн таварлă производство гавар вырăнне сутăнакан, харпăр хăйне куллен кирлĕ япаласемпе çеç çыхăнса тăрать; пирĕн экономикăлла строй вăхăтĕнче унăн анлăшне пўлнĕ тата виçене лартнă.

План йĕркипе ĕçлесе тăракан тата совет государствине усă кўрсе тăракан пирĕн таварлă производство, «укçа хуçалăхĕн» механизмĕпе пĕрле, социализмла производствăна аталантарса тата çирĕплетсе пыма пулăшать.

Социализм вăхăтĕнче таварлă производство юлни, хальхи вăхăтра пирĕн çĕршывра социализмла производствăн икĕ тĕп форми — пĕтĕм халăх производствин форми тата колхозла форма пурринчен килет.

Пирĕн çĕршывра хаклăх законĕ те пур. Тавасем тата таварлă производство пур çĕрте хаклăх законĕ те пулмасăр тăма пултараймасть, тесе вĕрентет И. В. Сталин.

Социализм условийĕсенче хаклăх законĕ хаксем туса паракан тата вĕсене улăштаракан экономикăлла закон пулса тăрать. Çак закон тавар хакне, япалана тума обществăлла ĕçлеве мĕн чухлĕ тăкакланине кура, татса парать. Пирĕн çĕршывра хаклăх законĕ чи малтан таварсем сутса илни çине, куллен кирлĕ таварсене улăштарни çине саралать. Çынсене куллен кирлĕ таварсене сутса илсе улăштарнă çĕрте хаклăх законĕ хăшпĕр таран регулятор вырăнĕнче сыхланса юлать. Капитализм условийĕсенче хаклăх законĕ пĕтĕм производство регуляторĕ пулса тăрать, çавăнпа та вăл вăхăтран вăхăта пулса пыракан перепроизводство кризисĕсем патне илсе пырать. Социализм условийĕсенче хаклăх законĕ пĕтĕм социализмла производствăшăн регулятор вырăнĕнче пулмасть. Пирĕн экономикăлла строй вăхăтĕнчи хаклăх законĕн анлăшне хытă пўлнĕ тата ăна виçене лартнă. Пирĕн çĕршывра хаклăх законне производство хатĕрĕсене обществăлла харпăрлăх туса хунипе пўлнĕ, халăх хуçалăхне план йĕркипе аталантармалли закон вăйĕпе пўлнĕ, пирĕн çултăлăклăх тата пилĕк çуллăх плансемпе пўлнĕ.

И. В. Сталин пирĕн социализмла производствăра хаклăх законĕ регулятор пулса тăмасть, тесе вĕрентет. Анчах вăл çапах та производство çине хăйĕн вăйне сарать. «Ĕç ана мĕнре, тесе вĕрентет И. В. Сталин: производство процесĕнче тухакан ĕç вăйне çĕнетме куллен кирлĕ продуктсене пирĕн патра таварсем пек туса кăларса сутаççĕ, вĕсем хаклăх „законĕн вăйĕсене пăхăнаççĕ»."

Хаклăх законĕ пирĕн хозяйственнисемпе предприятисен руководителĕсемшĕн калама çук практикăлла пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хаклăх законĕ хушни тата унпа ĕçре пĕлсе, ăнланулла усă курни пирĕн хозяйственниксене производствăна тĕплĕн ертсе пыма вĕрентет тата дисциплинăна пăхăнса пыма хăнăхтарать, производство ăшĕнчи курăнман резервсене шыраса тупса усă курма пулăшать, производство меслечĕсене пĕтĕмпех лайăхлатма, япалан хăйне тăракан хакне йўнетсе пыма тата предприятисен тупăшне ўстерме пулăшать.

И. В. Сталин пирĕн общество социализмран коммунизма куçса пынă май таварлă производство тата хаклăх законĕ пĕтсе пырассине кăтартса пачĕ.

«ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă кĕнекере хуласа ял хушшинчи, ăс-тăн ĕçлевĕпе вăйхал ĕçлевĕ хушшинчи хирĕç-хирĕçлĕхе пĕтересси çинчен тăракан ыйтăва ăслăлăх тĕлĕшĕнчен ăнлантарса панă, çавсем хушшинче социализм вăхăтĕнче те юлакан тĕп уйрăмлăхсене пĕтересси çинчен тăракан проблемăна татса панă.

* * *

Тĕнчере халĕ хуçалăхăн пĕр-пĕрне хирĕçле икĕ системи пур. Вĕсем мĕнле закономерноçсемпе пурăннине тата вĕсем хушшинчи кĕрешĕве пур енчен те тĕпчесе тухса, пĕтĕм тĕнчери рабочи юхăмĕн опытне пĕтĕçтерсе, И. В. Сталин ку чухнехи тĕнчери лару-тăрăва çав тери уççăн анализ туса парать, капитализмăн пĕтĕмĕшле кризисĕн çĕнĕ, иккĕмĕш сыпăкĕн уйрăмлăхĕсене туллин кăтартса парать. Çав пĕтĕмĕшле кризис халĕ нихçанхинчен те ытларах тарăнланса пырать.

И. В. Сталин капитализмăн пĕтĕмĕшле кризисĕ пĕтĕм тĕнчери капитализм системин пур енлĕ кризисĕ пулса тăрать, тесе вĕрентет. Вăл экономикăна кăна мар, политикăна та, тепĕр майлă каласан, капитализмăн пур облаçĕсене те, экономика никĕсне те, ăна тивĕçлĕ надстройкăсене те саварса илнĕ.

Пĕтĕм тĕнчери капитализмла хуçалăх системин кризисĕсем, пĕтĕм тĕнчери вăрçăсенче палăраканскерсем, тĕнчери капитализм системин пĕтĕмĕшле кризисĕ аталанса пынин сыпăкĕсем пулса тăраççĕ, тесе кăтартса парать Сталин. Тĕнчери иккĕмĕш вăрçă тĕнчери капитализмла системăн пĕтĕмĕшле кризисне малалла тарăнлатрĕ.

Тĕнчери иккĕмĕш вăрçă тапхăрĕнче, уйрăмах та Европăри тата Азири халăх демократи çĕршывĕсем капитализм системинчен уйрăлса кайнă хыççăн, пĕтĕмĕшле кризисăн иккĕмĕш сыпăкĕ пуçланса кайрĕ.

Капитализм системин пĕтĕмĕшле кризисне тарăнлатса пыракан сăлтав вăл, пĕр енчен, капитализмăн тĕнчери экономика системи ытларах та ытларах хавшаса пыни, тепĕр енчен, капитализмран уйрăлса кайнă çĕршывсен—ССР Союзĕн, Китайăн тата ытти халăх демократи çĕршывĕсен экономикăлла хăвачĕ ўссе пыни пулать.

Тĕнчери иккĕмĕш вăрçă хыççăн пĕр-пĕрне хирĕçле икĕ лагерь пулса тăчĕ, çапла вара тĕнчери çĕршывсене сыхăнтарса тăнă пĕрлĕхлĕ рынокран пĕр-пĕрне хирĕç тăракан икĕ рынок пулса кайрĕ. Çакă вăл капитализмшăн таварсем вырнаçтарса тăмалли тĕнчери рынок условийĕсем япăхланасси патне, капитализмла тĕп çĕршывсен тĕнчери ресурсемпе усă курма вăй хумалли вырăнĕсем чакасси патне, çав çĕршывсенчи предприятисем пĕтĕм вăйпа ĕçлемесĕр тăрасси вăйланни патне, империализм лагерĕнче хирĕçўсем, конфликтсем тата çапăçусем ўссе пырасси патне илсе çитерчĕ.

И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă кĕнеки тĕнчери ĕçсыннисене империализма хирĕç, миршĕн, демократишĕн тата социализмшăн кĕрешмелли çул-йĕре кăтартса парать.

* * *

И. В. Сталин социализмран коммунизма куçма малтанлăха кирлĕ тĕп условисем çинчен вĕрентни марксистла теорие татах та пуянлатни пулса тăрать.

Коммунизма куçма сăмахпа мар, чăнчăнах хатĕрленсе çитес тесен, сахалтан та малтанлăха кирлĕ виçĕ тĕп условие пурнăçа кĕртес пулать, тесе вĕрентет Сталин.

«Пĕрремĕшĕнчен, ...пĕтĕм обществăлла производствăна вĕçĕмсĕр ўстерсе пыма, уйрăмах производство хатĕрĕсем туса кăларассине ытларах ўстерсе пыма çирĕп никĕс тумалла. Производство хатĕрĕсем туса кăларассине ытларах ўстерни çав производство хăйĕн предприятийĕсене те, çавăн пекех халăх хуçалăхĕн ытти пур отраслĕсен предприятийĕсене те оборудовани парса тăмалла пулнăран кăна мар кирлĕ, çак производство пулмасан саралса пыракан воспроизводство тума пачах май çукран та кирлĕ».

Çапла вара, социализмран коммунизма куçма коммунизмăн вăйлă аталаннă материалла-производствăлла никĕсне тумалла, обществăн производительнăй вăйĕсене çав тери хытă ўстермелле. Çак никĕс çинче кăна обществăна кирлĕ продуктсене вĕçĕ-хĕррисĕр туса кăларма май пулать, çавăн чухне çеç коммунизм принципне пурнăçлама май пулать.

Пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана ăнăçлăн тултарни коммунизмăн материаллă-производствăлла никĕсне тĕреклетес енĕпе пысăк утăм туни пулать. Çак задачăна пурнăçланă çĕрте коммунизмăн аслă стройкисене туса пĕтерни пысăк вырăн йышăнса тăрать.

«Иккĕмĕшĕнчен, тесе вĕрентет И. В. Сталин, колхозсене усă кўрсе, çапла вара, пĕтĕм обществăна усă кўрсе, майĕпен улшăнусем туса пынипе колхозла харпăрлăха пĕтĕм халăх харпăрлăхĕн шайне çити çĕклемелле, çавăн пекех майĕпен улшăнусем туса пынипе, тавар сутса илни вырăнне продуктпа продукт улăштарса илес йĕрке тумалла, вара центрти власть е пĕр-пĕр урăх обществăлла-экономикăлла центр обществăлла производствăн пĕтĕм продукцине общество интересĕсемшĕн тытса тăма пултарать».

Хальхи вăхăтра колхозла харпăрлăхпа тавара сутса илни пирĕн социализмла хуçалăха аталантарса пынă çĕрте ăнăçлăнах пулăшса тăраççĕ, обществăна пысăк усă парса тăраççĕ. Вĕсем çитес çывăхри вăхăтра та усă парса тăрĕç, анчах та пирĕн хамăр умра коммунизм патне малалла куçса пымалли задача тănине асра тытса тăмалла.

«Виççĕмĕшĕнчен, тесе вĕрентет И. В. Сталин, общество культурине чи çўлĕ шая çити ўстермелле, вăл обществăн мĕнпур членĕсене вăй-халпа ăс-тăн тĕлĕшĕнчен пултарулăхсене пур енĕпе те аталанăвăн активлă деятелĕсем пулмашкăн çителĕклĕ таран вĕренме пултарччăр, вĕсем ирĕклĕн професси суйласа илме пултарччăр, çапла вара вĕсен, ĕçлев пайланса тăнине пула, ĕмĕр тăршшĕпех пĕр-пĕр профессипе сыхăнса тăмалла ан пултăр».

Çак никĕс çинче вара, ăс-тăн ĕçлевĕпе вăй-хал ĕçлевĕ хушшинчи тĕп уйрăмлăхсем те пĕтĕç, ĕçсыннисен культурăпа техникăлла шайĕ инженерсемпе техниксен шайĕ таран ўсĕ. Çав задачăна пурнăçлама, тесе вĕрентет Сталин юлташ, ĕç кунне 6 сехете çити, унтан тата 5 сехет таран та чакармалла. Çапла туни общество членĕсене пур енĕпе те пĕлўсем илмешкĕн ирĕклĕ вăхăт çителĕклĕ туса парать. Çак задачăна пурнăçланă чухне тата обязательнăй йĕркепе политехникăна вĕрентме тытăнни, çавăн пекех тата ĕçсыннисен пурнăçне малашне те лайăхлатса пыни, пурăнмалли çурт-йĕр условийĕсене тĕпренех лайăхлатни уйрăмах пысăк вырăн йышăнса тăракан пулаççĕ.

Çак малтанлăха кирлĕ виçĕ тĕп условие, вĕсене пурне те пĕрле илсе, пурнăçа кĕртнĕ хыççăн кăна ĕçлев çынсен пурнăçĕнче чи кирли пулса тăрĕ, социализм формулинчен — «кашниннчен унăн пултарулăхне кура, кашнине—унăн ĕçне кура» текен формулăран коммунизм формули патне—«кашниннчен унăн пултарулăхне кура, кашнине—хăйне кирлине кура» текен формула патне куçма пулать. Çак малтанлăха кирлĕ тĕп условисене пурнăçласан кăна социализм экономикинчен чи çўлте тăракан экономика—коммунизм экономики патне тĕпренех куçма пулать.

Сталин юлташăн çак программăлла кăтартăвĕсем пирĕн партин тата совет халăхĕн коммунизм патне пымалли çулне вăйлă прожектор пек çутатса тăраççĕ.

Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче тунă докладра: «Коммунизм обществине пĕтĕмпех туса çитерме мĕн кирли пирĕн пурте пур. Совет çĕршывĕн çутçанталăкри пуянлăхсем иксĕлми нумай. Пирĕн государство çак пысăк пуянлăхсемпе ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн усă курма пултарнине кăтартса пачĕ. Совет халăхĕ çĕнĕ общество тума пĕлнине кăтартса пачĕ, вăл малалла шанчăклă пăхать», терĕ.

Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă гениллĕ произведенийĕ коммунизм тумалли чаплă программа пулса тăрать. Маленков юлташ траурлă митингра каланă хăйĕн сăмахĕнче: «пирĕн çулпуç тата учитель аслă Сталин пирĕнтен уйрăлса кайни мĕнпур совет çыннисене совет халăхĕ умĕнче тăракан питех те пысăк задачăсене пурнăçа кĕртес тесе харпăр хăйĕн вăйне темиçе хут ўстерсе ĕçлеме, коммунизм обществи тăвас пĕрлехи ĕçшĕн нумайрах вăй хума... хушать», терĕ. Совет халăхĕ, партин XIX-мĕш съездĕн решенийĕсемпе, Сталин юлташăн классикла произведенийĕпе хавхаланса, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, пирĕн çĕршывра коммунизм тумалли аслă тĕллеве пурнăçа кĕртессишĕн ăнăçлăн кĕрешет.

* * *

И. В. Сталинăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенине чăвашла куçаракансем пĕтĕм ответлăха туйса çăмăл чĕлхепе куçарма тăрăшнă. Ку таранччен политикăлла экономи терминĕсене чăвашла куçарни пулман. Çавăнпа та вулаканссемшĕн хăшпĕр терминсем йывăр пек курăнаççĕ. Анчах хăнăхса çитсен вĕсем те, ытти терминсем пекех, кашни вулаканшăнах çăмăл терминсем пулса тăрĕç.

Хăшпĕр тексто орфографи йăнăшсем те, терминсене тĕрлĕрен каланисем те, чăвашла ытла ина мар вырăнсем те тĕл пулаççĕ. Уйрăм кĕнеке туса пичетлесе кăларнă чухне çав çитменлĕхсене редакторсем тўрлетессе шанса тăратпăр.

Çак чаплă произведени чăвашла пичетленсе тухни марксизм теорине вĕренессине çўлĕ пусăма лартма пулăшĕ.

М. АНДРЕЕВ,

экономика наукисен кандидачĕ.

Хамăр республикăра

Дояркăсен ăмăртăвĕ

ÇЕРПУ. Хрущев ячĕпе тăракан колхозри дояркăсем, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри работниксен республикăри социализмлă ăмăртăвне хутшăнса, кăçал сăвакан кашни ĕнерен 1.400 литртан кая мар сĕт суса илме сăмах панă. Хăйсен сăмахне вĕсем чыслăн пурнăçласа пыраççĕ.

Апрелĕн пĕрремĕшĕнче колхоз правленийĕ дояркăсем ăмăртса ĕçленин итогĕсене пăхса тухнă. Социализмла ăмăртура район Совечĕн депутачĕ Т. Филиппова юлташ мала тухнине палăртнă. Вăл хăйне çирĕплетсе панă кашни ĕнерен апрелĕн пĕрремĕшĕ тĕлне 665 литр сĕт суса илнĕ. Унпа пĕрле ĕçлекен ытти дояркăсем те тăрăшса ĕçленине палăртнă. Е. Кириллова, М. Александрова, Е. Кузьмина дояркăсем кашниех сăвакан ĕне пуçне 600-шер литр ытла сĕт суса илнĕ.

Колхоçра ĕнесене силоспа, пĕçернĕ çĕрулмипе, утăпа тăрантараççĕ, улăма тураса, вĕри шывпа çемçетсе посыпка сапса çитереççĕ. Ĕнесене лайăх тăрантарнине пула, иртнĕ çулхипе танлаштарсан, кăçал икĕ хут ытларах сĕт суса илнĕ. Сăмахран, 1952 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне кашни ĕнерен 213,9-шер литр сĕт суса илнĕ, кăçал çак вăхăт тĕлне 433-шер литр сунă. Колхоз государствăна сĕт памалли çулталăкри плана 66 процент тултарчĕ.

С. ШАДИН.

Наука çитĕнĕвĕсемпе паллашаççĕ

ОКТЯБРЬСКИ. Туппай Сĕмĕл ялĕнче, вулав çуртĕ пуçарнипе, 1952 çулхи сентябрь уйăхĕнчен пуçласа кашни шăматкун наука çитĕнĕвĕсемпе паллашмалли кун ирттереççĕ. Çав кун вулав çуртне ялти çамрăксем çеç мар, ватă колхозниксемпе колхозницăсем те йышлăн пухăнаççĕ. Туппай Сĕмĕл ялĕнче пурăнакансемсĕр пуçне, Кив Тукай ялĕнчен те колхозниксем килеççĕ.

Çав кун яланах лекци вуланипе пуçланать. Лекци итленĕ хыççăн художествăлла пултарулăх коллективĕсем çĕнĕ постановкăсем кăтартаççĕ е концертсем параççĕ.

Ялти лекторсен ушкăнĕнчи лекторсем А. Шахматов, А. Одинцов, Н. Иванова, В. Исаева, М. Кузьмина, парти райкомĕн пропагандисчĕ Г. Тюмеров тата ытти юлташсем те темиçешер лекци вуласа панă. Хĕллехи каникул вăхăтĕнче Хусанти химипе технологи институтĕнче вĕренекен студент А. Иванов, ялхуçалăх институтĕнче вĕренекен Е. Минеев юлташсем лекцисем вуласа пачĕç.

А. ОДИНЦОВ.

Çыхăну работникĕсен хастарлăхĕ

СЕНТЕР. Ильинкăри почта уйрăмĕн коллективĕ Урпашри почта уйрăмĕн коллективĕпе ăмăртать. Ильинкăри уйрăм иртнĕ кварталти плана 108 процент тултарнă. Май уявĕ умĕнхи ăмăртура Е. Смелова телефонистка, «Хлебороб» колхозри П. Перков почтальон, «Аврора» колхозри В. Назарова почтальон лайăх тĕслĕх кăтартаççĕ.

Почта уйрăмĕн коллективĕ апрельти плана апрелĕн 25-мĕшĕ тĕлне 120 процент тултарассишĕн кĕрешет.

А. КАХОВСКИЙ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: Шупашкарти пир-авăр комбинатне тунă çĕрте. Мастер А. П. Якимов (сылтăмри) платниксен бригадирĕсене ĕç планĕпе паллаштарать. Сулахайран сылтăмалла—бригадирсем А. И. Фролов, И. А. Иванов, Н. И. Телчин, А. Д. Сарбаев. Вĕсен бригадисене СССР Çăмăл тата апат-çимĕç промышленность министерстви пысăк пахалăхпа тата пысăк тухăçлă ĕçлекен бригада ятне панă.

Г. ЗИНЬКОВ фотоÿкерчĕкĕ.

Кирпĕч ытларах туса кăларар

(Канашри кирпĕч завочĕн директорĕ В. РАЗУМОВ юлташ каласа пани)

Канашри кирпĕч завочĕн коллективĕ кăçал планран ирттерсе 200 пин кирпĕч туса кăларма, продукци пахалăхне лайăхлатма, Майăн 1-мĕшĕ тĕлне 120 пин чĕрĕ кирпĕч туса кăларма пулчĕ.

Кирпĕч тунă çĕрте кăçал икĕ бригада ĕçлет. Рабочисене ĕçе тĕрĕс вырнаçтарса тухнă. Бригадăсене опытлă çынсем ертсе пыраççĕ.

Нумаях пулмасть локомобиль вырнаçтарса лартнă. Кÿ вăл ĕçе чылай çăмăллатать. Тăм турттармалли кивелнĕ вагонеткăсем вырăнне кăçал 29 çĕнĕ вагонетка пăраççĕ.

Ĕç тухăçлăхне ÿстерес ĕçре рабочисемпе служащисен пурнăçне лайăхлатни, лайăх услови туса пани пысăк вырăн йышăнать. Кăçал мунча тата пурăнмалли çĕнĕ çурт тăватпăр.

Рабочисемпе служащисем хушшинче агитацилле-массăлла ĕçе анлăн сарса яратпăр. Завода чылай хаçат-журнал килсе тăрать. Ĕçри çитĕнÿсемпе çитменлĕхсем çинчен стена хаçачĕ çутатсах тăрать.

Завод ĕçĕнче çитменлĕхсем те пур-ха. Иртнĕ çулсенче çумăр çунă вăхăтрах завод ĕçлемесĕр тăнă. Карьера çумăр каясран хÿтĕлемелли пулман. Çавна кăçал та туман-ха. Рабочисене техникăна вĕрентес ĕçе çителĕксĕр йĕркеленĕ.

Завод коллективĕ асăннă çитменлĕхсене пĕтерĕ, йышăннă обязательствăна чыслă пурнăçлассишĕн ывăнма пĕлмесĕр кĕрешĕ.

Планран ирттерсе пĕр миллион кирпĕч

СЕНТĔРВĂРРИ. Ивановăри кирпĕч заводĕнчи рабочисемпе служащисем Шупашкарти кирпĕч завочĕн коллективĕ социализмла ăмăрту пуçарма чĕнсе каланине тулли кăмăлпа кĕтсе илчĕç, çĕнĕ обязательство йышăнчĕç.

Завод коллективĕ планран ирттерсе пĕр миллион чĕрĕ кирпĕч, 1,1 миллион хĕртнĕ кирпĕч туса кăларма, пĕрремĕш сортлă кирпĕч 80 процент вырăнне 83 процент туса кăларма, топливо икĕ процент перекетлеме, ĕç тухăçлăхне ÿстерме, продукцин хăйне ларакан хакне йÿнетме сăмах пачĕ.

Заводра социализмла ăмăрту анлăн саралчĕ. Сезона вăхăтра тата тимлĕн хатĕрленессишĕн хĕрÿллĕ кĕрешÿ пырать. Нумай рабочисем пысăк тухăçлăхпа ĕçлеççĕ. Н. Григорьев, К. Сергеев, П. Соколов юлташсем нормăна тăтăшах ирттерсе тултараççĕ. Завод коллективĕ сезон пуçланнă кунсенчех йĕркеллĕ ĕçлеме хатĕрленет.

М. ТИТОВ.

Стахановецсен йышĕ ÿсет

УЛАТĂР. Хулари предприятисенче тата чугун çул организацийĕсенче социализмла ăмăрту куллен вăйланса пырать. Май уявĕ ячĕпе стахановла вахтăна тăрса, пăравуссем юсакан заводри И. Сидоров тимĕрçĕ, Т. Лобанова формовщица, Т. Сидоров токарь тата ытти стахановецсем ĕç нормине куллен 150—200 процент е ытларах та тултараççĕ.

Махорка фабрикин коллективĕ продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, ĕç тухăçлăхне ÿстерессишĕн, чĕртавар перекетлессишĕн кĕрешет. Вуншар рабочи ĕç нормине тăтăшах ирттерсе тултараççĕ, паха продукци туса кăлараççĕ. Çак кунсенче Н. Кузин токарь уйрăмах паха тĕслĕхсем кăтартать: ĕç нормине 270 процент таран тултарса пырать.

Аш-какай комбинатĕнче, йывăç япаласем тăвакан комбинатра, чугун çул транспортĕнче тата ытти исенче те стахановецсен хисепĕ куллен ÿссе пырать.

Н. АННЕНКОВ.

МТС-семпе колхозсем валли

Ялхуçалăх снабженин Чăваш республикинчи кантурĕ республикăри машина-трактор станцийĕсемпе колхозсем валли тĕрлĕ ялхуçалăх машинисем тата удобренисем кÿрсе килес тĕлĕшпе ĕçлет. Кăçал республикăри колхозсем валли ялхуçалăх машинисем, выльăх-чĕрлĕх фермисенче апат хатĕрлесе памалли машинăсем иртнĕ çулхинчен нумай ытларах илсе килеççĕ.

Кăçалхи пĕрремĕш кварталта республикăри колхозсем валли 4.618 тонна минераллă удобрени, 18.418 порци бактериллĕ удобрени—нитрагин илсе килнĕ. Кăçал республикăри колхозсем 4.887 тонна минераллă удобренисем туяннă. Минераллă тата бактериллĕ удобрени нумай туяннă районсенчен Вăрнар, Ишлей, Етĕрне, Сĕнтĕр тата ытти районсене палăртмалла.

Ялхуçалăх машинисенчен ансăр ретпе акакан тĕрлĕ маркăллă трактор сеялкисем, «КП-4» маркăллă культиваторсем, утă çулмалли тата ытти машинăсем те кÿрсе килнĕ.

Çитес кунсенче лущильниксем, «Зигзаг» сÿресем, «КОН-2,3» маркăллă культиваторсем, çĕрулми лартмалли машинăсем, сортировкăсем, утă-улăм турамалли машинăсем, кормозапарниксем кÿрсе килмелле.

Кăçал республикăри МТС-сене çĕнĕрен 3.800 машина илсе килмелле. Кÿ вăл 5 миллион тенкĕлĕх ытла пулать.

А. ЖИРНОВ.

Çĕнĕ инсценировка

Çак кунсенче Чăваш Совет писателĕсен Союзĕн драма секцийĕ Чăваш АССР тава тивĕçлĕ артисчĕ И. Молодов К. В. Ивановăн «Нарспи» поэми тăрăх сырнă çĕнĕ инсценировкăна пăхса тухрĕ. Секци ларăвĕнче драматургсемпе артистсем пулчĕç. Инсценировкăна вуласа панă хыççăн И. Максимов-Кошкинский, К. Иванов, Н. Айзман, Е. Никитин, В. Ржанов, А. Кăлган, А. Угралкин тата ытти юлташсем те тухса каларĕç. Вĕсем çĕнĕ инсценировкăн паха енĕсене палăртрĕç, хăшпĕр çитменлĕхсене кăтартса пачĕç.

Инсценировка авторĕ И. Молодов тухса каланă юлташсене çитменлĕхсене палăртнăшăн, паха сĕнÿсем панăшăн тав турĕ, инсценировкăри çитменлĕхсене çитес вăхăтрах пĕтерме сăмах пачĕ.

Нимĕç чĕлхине вĕрентекен учительсен курсĕ

ЭЛĔК. Районти çутĕç пайĕ çак кунсенче нимĕç чĕлхине вĕрентекен учительсен пилĕк кунлăх курсне ирттерчĕ.

Курсра Элĕкри И. Я. Яковлев ячĕпе тăракан вăтам шкул преподавателĕ И. Агафонов юлташ: «Программăн çĕнĕ кăтартăвĕсем тăрăх вулама тата каласма вĕрентесси», «Нимĕç чĕлхи урокĕсенче ачасен каласăвне аталантарасси» темăсемпе докладсем туса пачĕ. Чăваш АССР шкулĕсен тава тивĕçлĕ учителĕ Ф. Кузьмин «Нимĕç чĕлхине вĕрентес ĕçре Сталин юлташ чĕлхе çинчен вĕрентнинчен тухса тăракан задачăсем» темăпа, Вырăс Сурăмĕнчи вăтам шкул преподавателĕ М. Константинов «Ĕçе планласси тата вĕренекенсен пĕлĕвĕсене шута илесси» темăпа тунă докладсене итлерĕç.

Учительсем пĕр-пĕрин опычĕпе паллашрĕç. Контрольнăй çыру ĕçĕнче уйрăммăнах М. Константинов, Е. Хамуров, П. Дубиков, А. Лукина учительсем лайăх тĕслĕх кăтартрĕç.

С. ТИХОНОВ.

АГРОНОМ КАНАШĔ

Суданка курăкĕ—выльăхсем валли паха апат

Суданка—пĕр çул ÿсекен курăк. Пирĕн Чăваш республикинче ăна акма пуçлани ик-виç çул кăна çитет.

Унăн паха енĕсенчен пĕри—вăл пысăк тухăçлă пулни, гектартан 300 центнер таран симĕс курăк тухать. Кÿ вăл çарансем çинчен çулса илекен курăкран 3—4 хут ытларах. Чăваш ялхуçалăх институчĕн вĕренÿ хуçалăхĕнче 1952 çулта суданка курăкĕ питĕ çÿлĕ, çăра пулчĕ. Чкаловски районĕнчи «Гвардеец» колхозра 1951 çулта суданка курăкне 5 гектар акнă, кашни гектартан 215 центнер симĕс курăк çулса илнĕ. 1952 çулта ăна ку колхозра 15 гектар акса ÿстернĕ. Кашни гектартан 278 центнер чĕрĕ курăк пухса кĕртнĕ. Чурачăк районĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхозра суданка курăкне 1952 çулта кашни гектартан 280 центнера яхăн çулса илнĕ. Çав районтах «За коммунизм» колхозра вăл гектартан 250 центнер тухнă.

Суданка курăк утинче тутлăхлă япаласем улăхри çаран çинче туса илнĕ утăран ним чухлĕ те кая мар. Выльăх апачĕ тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри наукăпа тĕпчев институчĕ тĕрĕслесе пăхнă хыççăн çакă палăрнă: суданка курăк утинче тутлăхлă япаласем (белоксем, углеводсем, минераллă тăварсем) шыв илекен çарансем çинче туса илнĕ утăринчен чылай ытларах.

Суданка курăкран силос тусан питĕ аван, ăна выльăхсем юратса çиеççĕ. Çаксене шута илсе, суданка курăкне республикăри колхозсенче ытларах акма пуçламалла.

Суданка мĕнле условисенче лайăх ÿсе аталанать тесе ыйтсан, çакна кăтартса парас пулать: суданка ăшша юратакан культура. Суданка вăррине ăшă çанталăк пуçланмасăр акма юрамасть. Ăна акнă тĕле тăпрара 8—10 сантиметр тарăнăшĕнче сахалтан та 10—12 градус ăшă пулмалла. Аксан малтанхи 4—5 эрнере суданка калчи питĕ хуллен ÿсет. Çакна пула ăна çумкурăксем хупласа илме пултараççĕ. Çавăнпа та суданкăна çумкурăксенчен тасатнă участоксем çине акас пулать.

Суданка вăррине икĕ майпа акма юрать: талкăш ретпе тата анлă ретпе, ретпе рет хушшине 45—50 сантиметр пушă вырăн хăварса акмалла. Выльăх апачĕ тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри наукăпа тĕпчев институчĕ вăрманлă-çеçенхирлĕ тăрăхăн çурçĕрти районĕсенче суданка вăррине тăтăш ретпе акма сĕнет. Ку майпа акни уйрăмах çумкурăксенчен тасатнă участоксем çинче паха результатсем парать. Суданка акмалли участоксем çинче çумкурăксем ÿсесси курăнса тăрать пулсан, анлă ретпе аксан лайăхрах пулать. Ку майпа аксан, çумкурăксене пĕтерме çăмăлтарах, мĕншĕн тесен ретсем хушшисене механизмсемпе çемçетсе тăрса çумкурăксене йăлтах пĕтерме пулать.

Гектар çине мĕн чухлĕ акмалли норма на çак условисене кура йышăнаççĕ: мĕнле майпа акни, акмалли участок çине удобрени кăларни, вегетаци вăхăтĕнче тăпрара нÿрĕ мĕн чухлĕ пулни—çаксем акмалли норма мĕнле пулмаллине кăтартса параççĕ. Выльăх апачĕ тĕлĕшпе ĕçлекен Пĕтĕм Союзри наукăпа тĕпчев институчĕ çапла сĕнет: Совет Союзĕн Европа пайĕнчи хура тăпраллă мар тăрăхра талкăш ретпе акнă чухне пĕр гектар çине 25 килограмм, анлă ретпе акнă чухне 20 килограмм акма сĕнет.

Вăрăсене тăпра ăшне 3—4 сантиметр тарăнăшне акмалла. Акнă вăрлăх пĕрчисем патне нÿрĕ хăпармалла тăвассишĕн тăрăшмалла. Çавна шута илсе, суданка акнă участока катокпа пусарса тухаççĕ. Ку мелпе уйрăмах çанталăк уяр тăракан çулсенче усă кураççĕ. Тăпрара нÿрĕ çителĕклĕ пулсан е тата акнă хыççăн çумăрсем çунă пулсан, пусарса тухас вырăнне ретсене сÿрелеççĕ.

Лайăх условисенче акнă вăрлăх 6—7 кун хушшинче шăтса тухать. Малтанхи 4—5 эрнере суданка калчине çумкурăк хупласа илесрен хытă асăрхас пулать. Анлă ретпе акнă пулсан, ретсем хушшинчи тăпрана кăпкалатсах тăмалла, культиваци туса çумкурăксене пĕтермелле.

Тĕмеленме тытăннă вăхăт пуçлансан, суданка калчи хăвăрт ÿсме тытăнать, çăраланса сип-симĕс ешерсе каять.

Суданка курăкне пуç кăларнă вăхăтра çулса пуçтарса кĕртмелле. Çав тапхăрта туса илнĕ утăра тутлăхлă япаласем ытларах пулаççĕ, унсăр пуçне тата çав вăхăтра çулса кĕртнĕ утă çемçе пулать, хытса каймасть.

Çулăсса тракторпа е лашапа ĕçлекен косилкăпа çулаççĕ, хăмăлне 7—8 сантиметр хăвараççĕ. Капла çулни суданка курăкне тепĕр хут хăвăрт ÿссе кайма пулăшать. Вара вăл çу вĕçĕнче иккĕмĕш хут çулса илме аталанса çитет.

А. ЛЕОНТЬЕВ,
ялхуçалăх наукисен кандидачĕ.

Экзамен тытаççĕ

Вăрнар районĕнчи Каганович ячĕпе тăракан колхозра вĕренÿ çулĕ пуçланнăранпах виçĕ çуллăх агрокурсра занятисем йĕркеллĕ пулса пычĕç. Унта колхозниксем, уй-хир бригадирĕсем—пурĕ 22 çын вĕренеççĕ. Курс руководителĕ Иван Ананьевич Данилов юлташ занятисене нагляднăй пособисемпе усă курса, пурне те ăнланмалла ирттерет. Курсра вĕренекенсем ялхуçалăх наукин çитĕнĕвĕсемпе малта пыракансен опытне тĕплĕн ăнланма тата вĕсемпе ĕçре усă курма тăрăшаççĕ.

Кăçал агрокурсра пурĕ 190 сехет вĕреннĕ. Вăл шутра 56 сехет хушши практикăлла занятисем пулнă. Курса çÿренĕ колхозниксем ялхуçалăх машинисене юсама, тырă сортлама, кĕрхи калчасене удобренисем сапса пама вĕреннĕ.

Халĕ курсра вĕренекенсем экзамен тытаççĕ.

2-мĕш уй-хир бригадин бригадирĕ Игнатий Федоров юлташа экзаменра партипе правительство ялхуçалăхĕ умне тĕштырăсен тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе лартнă задачăсем çинчен каласа пама тиврĕ. Билетри ыйту çине вăл аван ответлерĕ. Федоров юлташ курсра вĕренсе çирĕп пĕлÿ илнĕ. Вăл ытти ыйтусем çине те, сăмахран, ялхуçалăх культурисене яровизацилесе акни питĕ усăллă пулни çинчен те, нумай çул ÿсекен курăксене акасси, акнă курăксене пăхса ÿстересси çинчен те тĕплĕн тата тĕрĕс каласа пачĕ.

Правлени курсран вĕренсе тухнă колхозниксене çураки вăхăтĕнче колхоз производствинчи ответлă вырăнсенче ĕçлеме çирĕплетрĕ. Сăмахран, Михаил Иванов, Пелагея Георгиева, Алексей Фладимерьев колхозниксем трактор бригадинче прицепщиксем пулса ĕçлеççĕ. Василий Яковлев, Григорий Анисимов юлташсене тракторпа тырă акма уйăрнă.

Курсра вĕреннĕ колхозниксене, çуллахи вăхăтра хăйсен пултарулăхне ĕçре кăтартнă хыççăн, пĕрремĕш разрядри ялхуçалăх мастерĕн ятне параççĕ.

Е. ЗАХАРОВ.

Çуркуннепе çуллахи вăхăтра вăрман хатĕрлевне лайăх йĕркелер

Республикăри вăрман промышленноçĕ çав-çавах юлса пырать. «Чăвашвăрман» трестне пăхăнса тăракан вăрманпромхозсем 1952 çулта тата кăçалхи пĕрремĕш кварталта 1951 çулхинчен те сахалтарах йывăç хатĕрлерĕç, Тăван çĕршыв умĕнче пысăк парăма кĕчĕç. 1952 çулхи плана Çĕмĕрле вăрманпромхозĕ çеç ăнăçлă тултарчĕ. Кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра уйрăмах Пăрачкав, Улатăр тата Шăмăршă вăрманпромхозĕсем япăх ĕçлерĕç, плана 36—71 процент таран çеç тултарчĕç.

Партипе правительство вăрман промышленноçне пысăка хурса хаклаççĕ, ăна хăватлă техникăпа хĕçпăшаллантараççĕ. Кашни вăрманпромхозра ĕçе ăста пĕлекен кадрсем ÿссе çитĕнчĕç. Вăрçă хыççăнхи çулсенче республикăри предприятисем куçса çÿрекен электростанцисем, «КТ-12» тракторсем, лебедкăсем, крансем, автомашинăсем тата ытти механизмсем нумай туянна. Вăрман хатĕрлекенсем валли çĕнĕ поселоксем, пурăнмалли çуртсем, клубсем чылай лартнă. Партипе правительство тăрăшнипе рабочисемпе специалистсен пурнăçĕ тăтăшах лайăхланса пырать. Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕ хыççăн механизаторсен пуçарулăхĕпе пултарулăхĕ ÿсрĕ. Чылай трактористсем, шоферсем, мотористсем ĕç нормине тăтăшах ирттерсе тултараççĕ, хăватлă техникăна тухăçлăн ĕçлеттермелли çĕнĕрен те çĕнĕ мелсем шыраççĕ, тупаççĕ.

Вăрман промышленноçĕ япăх ĕçлени «Чăвашвăрман» тресчĕн тата Вырăнти топливо промышленность управленийĕн руководителĕсем паха майсемпе лайăх усă курма, оборудованипе механизмсене татти-сыпписĕр ĕçлеттерме, производствăна тĕрĕс организацилеме, социализмла ăмăртăва вăйлатма кирлĕ пек тăрăшманнинчен килет. Хăшпĕр вăрманпромхозсенче дисциплина çирĕп мар, мастерсемпе техноруксем, вăрман пункчĕсен начальникĕсем государство заданийĕсене пурнăçлассишĕн тивĕçлĕ ответлăх туймаççĕ. Вăрманпромхоз директорĕсен политика енĕпе ĕçлекен заместителĕсем партиллеполитикăлла тата партилле-организацилле ĕçе çĕнетсе лайăхлатма татăклă мерăсем йышăнмаççĕ. Хăшпĕр вăрманпромхозсенчи парторганизацисем администраци ĕçне япăх тĕрĕслесе тăраççĕ, самокритикăпа аялтан килекен критикăна вăйлатма тăрăшмаççĕ, хуçалăх руководителĕсен çитменлĕхĕсемпе килĕшсе пурăнаççĕ.

Рабочисем хушшинче социализмла ăмăртăва куллен ертсе пырасси, малта пыракансен опычĕпе меслетне пĕтĕçтерсе сарасси, культурăлла-массăлла ĕçе йĕркелесси—рабочкомсен пирвайхи тивĕçĕ. Анчах чылай рабочкомсем пуçарулла ĕçлемеççĕ, клубсемпе хĕрлĕ кĕтессенче, общежитисемпе столовăйсенче йĕркелĕх тума тăрăшмаççĕ. Рабочком председателĕсем профсоюз активĕпе тачă çыхăну тытмаççĕ, производствăлла канашлусем йышăнакан паха решенисене, рабочисем паракан сĕнÿсене пурнăçа кĕртессишĕн тимлĕ кĕрешмеççĕ. Вăрманпа сулă промышленноçĕнчи рабочисен профсоюз обкомĕн рабочкомсене ытларах пулăшмалла, активистсене воспитани парас, профсоюз ĕçĕнчи паха опыта сарас тĕлĕшпе пуçарулăрах пулмалла.

Вăрманпромхоз руководителĕсен кĕркуннепе хĕллехи вăхăтри çитменлĕхсемпе йăнăшсенчен тивĕçлĕ вывод тумалла, Тăван çĕршыв умĕнчи пĕрремĕш кварталти парăма çак кварталта татма татăклă мерăсем йышăнмалла. Анчах чылай хуçалăх руководителĕсем апла тумаççĕ. Сезон вĕçленнĕ хыççăн вăрманпромхозсем ĕç хăвартлăхне нумай чакарчĕç. «Чăвашвăрман» трестне пăхăнса тăракан предприятисем апрелĕн пĕрремĕш вунăкунлăхĕнче, мартăн пĕрремĕш вунăкунлăхĕнчипе танлаштарсан, механизмсемпе 30 процент йывăç сахалтарах турттарса кăларнă. Канаш, Шăмăршă, Приволжски тата Первомайски вăрманпромхозсем вара йывăç турттарма пачах чарăннă.

Иртнĕ çулсенче вăрманпромхозсем апрельпе май уйăхĕсенче йывăç сахал хатĕрленĕ. Хăшпĕр хуçалăх руководителĕсем кăçал та çавăн пек тума пăхаççĕ пулас. Анчах вĕсем йăнăшаççĕ. Государство интересĕсем иртнĕ çулсенчи çитменлĕхсене пĕтерме хушаççĕ. Тепĕр енчен, çакна манма юрамасть: вăрçă хыççăнхи çулсенче вăрманпромхозсем ансăр чугун çул юпписем е автомашинăсем çÿремелли çулсем тунă. Лайăх пăхса усрасан тата вăхăтра юсаса тăрсан, вăл çулсем тăрăх хĕлĕн-çăвĕн йывăç турттарма пулать. Йывăç касса хатĕрлеме электропăчкăсем çителĕклĕ.

Первомайски вăрманпромхозра çулсене юсаман. Çавăнпа та ĕнтĕ йывăç турттарас ĕç чарăнса ларнă. Приволжски, Вăрнар тата ытти хăшпĕр вăрманпромхозсем тури складсене йывăç сахал илсе кăларнă, çавăнпа вĕсем автомашинăсемпе лайăх усă кураймаççĕ. Нумай вăрманпромхозсенче механизмсене сулла ĕçлемелли кварталсене вăхăтра куçарман тата вĕсене тĕрĕс вырнаçтарман. Чăн та, çуркунне вăрманта производствăна организацилеме çăмăл мар. Анчах пирĕн кадрсем кирек мĕнле йывăрлăхсемпе чăрмавсене те ăнăçлă пĕтерсе пыма хăнăхнă.

Предприятисем çителĕксĕр ĕçленĕшĕн «Чăвашвăрман» тресчĕ те ответлă. Унăн руководителĕсем Киркинпа Лапинский юлташсем вăрманпромхозсем çуркунне ĕçлеме япăх хатĕрленнине пĕлмен мар, анчах çав йăнăша пĕтерме татăклă мерăсем йышăнман. Вĕсем предприятисен ĕçĕпе тĕплĕн интересленмеççĕ, унти çитменлĕхсемпе килĕшсе тăраççĕ, малта пыракан коллективсемпе производство новаторĕсен опытне пĕтĕçтерсе сарма, специалистсен ответлăхне хăпартма кирлĕ пек тăрăшмаççĕ. Трест руководителĕсен предприятисене ертсе пырас ĕçе вăйлатмалла, производствăри шалти резервсене палăртмалла, вĕсемпе тĕрĕс усă курма тăрăшмалла, технологи процесне çĕнетсе лайăхлатма пулăшмалла.

Халĕ вăрманта колхозниксем ĕçлемеççĕ. Вăрманпромхозсен пур ĕçе те хăйсен кадрĕсемпе пурнăçлама тивет. Ĕç ăнăçлăхне вăрман хатĕрлевне механизацилени, кадрсене тата техникăна тĕрĕс вырнаçтарни, машинăсемпе механизмсене иккĕшер смена ĕçлеттерни татса парать. Механизаторсем вăрман хатĕрленĕ çĕрте çеç ĕçлеччĕр.

Вăрманпромхозсен ĕçĕнчи пысăк çитменлĕх вăл—тракторсем, автомашинăсем тата ытти механизмсемпе машинăсем часчасах ахаль тăни, ĕçе комплексла механизацилемени. Чылай машинăсем юсавлă мар. Вăрманпромхоз руководителĕсен, «Чăвашвăрман» тресчĕн тата Вырăнти топливо промышленность управленийĕн машинăсемпе механизмсене юсас ĕçе лайăхлатмалла. Республикăра автомашинăсене тĕпрен юсаттармасăр 100 пин километр çÿретекен шоферсем, тракторсене, электростанцисене, крансене татти-сыпписĕр ĕçлеттерекен механизаторсем сахал мар. Вĕсен паха опычĕпе меслетне кашни механизатор пĕлсе тăтăр. Вăрманпромхозсен ĕçĕнче механизмсене пăхса усрасси тата юсасси—чи юсса пыракан ĕç. Çавăнпа кÿ ыйтупа парторганизацисен тимлĕн интересленмелле, слесарьсемпе механиксем тата шоферсем хушшинче массăлла-агитацилле ĕçе вăйлатмалла, механизмсене лайăх юсама мобилизацилемелле.

Улатăрти мастерской (ЦРМ) вăрманпромхозсен заказĕсене вăхăтра пурнăçламасть, çитменнине тата машинăсене паха юсамасть, хаклă илет. Мастерскойра юсанă машинăсем хăвăрт пăсăлаççĕ, вĕсене тепĕр хут тÿрлетме тивет, çавăн пирки ĕç хăвăртлăхĕсем чакаççĕ, график пурнăçланса пымасть. «Чăвашвăрман» тресчĕн, мастерской мĕншĕн япăх ĕçленине тĕпчесе тухса, çав çитменлĕхсене пĕтерме тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла.

Çĕнĕ техника нумайланса пынă май, вăрманпромхозсене рабочисем ытларах та ытларах кирлĕ. План тăрăх, «Чăвашвăрман» трестне пăхăнса тăракан предприятисене тата çĕршер рабочи кирлĕ. Чăваш республикинчи оргнабор кантурĕ вăрманпромхозсем валли рабочисем илес тĕлĕшпе япăх ĕçлет. Вăл пĕрремĕш кварталти задание çуррине те пурнăçламарĕ, халĕ те унăн ĕçĕнче улшăнусем çук. Калинино, Елчĕк, Комсомольски тата Шупашкар районĕсенче вăрманпромхозсем валли пĕр çын та илмен. Райсовет исполкомĕсен вăрман промышленноçне ĕç вăйĕ уйăрса парас тĕлĕшпе хăйсен ответлăхне ÿстермелле, оргнабор кантурĕн работникĕсене ытларах пулăшмалла.

Çак кунсенче вăрманпромхозсен тата Улатăрти сулă юхтаракан кантур умĕнче сулă юхтарас ĕçе ăнăçлă ирттерес тĕлĕшпе ответлă задача тăрать. Кăçал пĕчĕк юханшывсенче шыв сахал, çавăнпа пĕренесене хăвăртрах шыва ярса Атăлпа Сăрă çине хăвăртрах тата пĕр тăкаксăр юхтарса кăлармалла.

Вăрманпромхоз руководителĕсен кĕркуннепе хĕллехи вăхăтра хатĕрленĕ йывăçа стройкăсемпе предприятисене шыв тăрăх вăхăтра илсе çитермелле тăвас пулать. Пĕр пĕрене те вăрманта ан юлтăр.

КПСС Шăмăршă, Улатăр, Первомайски, Пăрачкав, Йĕпреç райкомĕсен рабочисемпе колхозниксем хушшинче партилле-политикăлла тата партилле-организацилле ĕçе вăйлатма, сулă юхтарас ĕçе вăхăтра пурнăçлама вăрманпромхозсене пулăшас пулать.

Пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле, вăрман хатĕрлекенсем те Май уявне ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тунипе кĕтсе илессишĕн кĕрешеççĕ. Нумай вăрманпромхозсен коллективĕсем уяв ячĕпе социализмла обязательствăсем йышăнчĕç. Вăрманпромхозсенчи партипе профсоюз организацийĕсен рабочисемпе служащисен пуçарулăхĕпе пултарулăхне пĕрмай вăйлатса пымалла, кашни рабочие ăмăртăва хутшăнма, малта пыракансен опычĕпе паллашма пулăшмалла, панă сăмаха чыслăн пурнăçлама паха майсем туса памалла. Уйрăмах çамрăк рабочисене воспитани парас, вĕсене кăткăс техникăна алла илме пулăшас тĕлĕшпе тимлĕн ĕçлени кирлĕ.

Кашни вăрманпромхозра инженерсемпе техниксем тата мастерсем пур. Çуркуннепе çуллахи вăхăтра механизмсене таттисыпписĕр ĕçлеттересси, технологи процесне çĕнетсе лайăхлатасси вĕсенчен нумай килет. Наукăпа техника хăвăрт аталанаççĕ, рационализаторсемпе изобретательсем, стахановецсем çĕнĕрен те çĕнĕ ĕç мелĕсем шухăшласа кăлараççĕ. Новаторсен ĕçри пуçарăвĕсене сарасси, юлса пыракансене малта пыракансемпе танлашма пулăшасси — инженерсен, техниксен, мастерсен тивĕçĕ.

Вăрман промышленноçĕ хĕлĕн-çăвĕн пĕр тикĕс ĕçлеме тивĕçлĕ. Халăх хуçалăхне пĕрене, хăма, шпал тата ытти йывăç материалсем çуллахи вăхăтра уйрăмах нумай кирлĕ. Çуркуннепе çуллахи вăхăтра вăрман хатĕрлевне кăтартуллă йĕркелени çулталăкри плана ăнăçлă тултарма пулăшĕ.

Коммунизмăн аслă стройкисене, шахтăсемпе чугун çул транспортне тата ыттисене йывăç çителĕклĕ парса тăрассишĕн вăрман хатĕрлекенсем хушшинче социализмла ăмăртăва анлăн сарар!

Н. АЛБУТОВ,
КПСС обкомĕн вăрман промышленность пайĕн заведующийĕ.

Çĕкленӳ çулĕ çинче

Румынире 1953 çулхи пĕрремĕш кварталта халăх хуçалăх планне тултарни

БУХАРЕСТ, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Румынири телеграф агентстви çапла пĕлтерет:

Румыни Халăх Республикин Министрĕсен Совечĕ çумĕнчи главнăй статистика управленийĕ халăх хуçалăхне аталантармалли государство планне 1953 çулхи пĕрремĕш кварталта тултарнин итогĕсем çинчен пĕлтерние пичетлĕсе кăларнă.

Промышленность продукци кăлармалли пĕрремĕш кварталти плана 101,1 процент тултарнă.

1953 çулхи пĕрремĕш кварталта промышленноçăн социализмла секторĕ продукци туса кăларасси 23,1 процент ӳснĕ. Промышленноçра ĕç тухăçлăхĕ 10,3 процент ӳснĕ. 1953 çулхи пĕрремĕш кварталта капитальнăй ĕçсем, 1952 çулхи пĕрремĕш кварталтипе танлаштарсан, 35,9 процент нумайрах тунă.

1953 çулхи пĕрремĕш кварталта ял хуçалăхĕнче социализмла сектор малалла тĕреклене пынă.

Май уявĕ умĕнхи ăмăрту

ШАНХАЙ. Шанхай хулинчи заводсемпе фабрикăсенчи рабочисем уяв умĕнхи кунсенче пысăк çĕкленӳпе ĕçлеççĕ. Чылай предприятисенче Пĕтĕм тĕнчери ĕçсыннисен уявĕ ячĕпе производствăри ăмăрту анлăн саралнă. Пиншер рабочисемпе служащисем, нумай производство бригадисем тата завод коллективĕсем Майăн пĕрремĕшне ĕç фронтĕнче çĕнĕ çĕнтерӳсем тунипе кĕтсе илме обязательство йышăнаççĕ.

Хаçатсем Китай республикинчи ытти хуласенче те Май уявĕ умĕнхи ăмăрту вăйланни çинчен çыраççĕ. «Цзефанжибао» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Ханчжоури цемент заводĕнчи рабочисем Май уявĕ ячĕпе апрель уйăхĕнчи производство планне ирттерсе тултарма обязательство йышăннă.

ПРАГА. Чехословаки халăхĕ Май уявне тимлĕн хатĕрленет. Островско-Карвински çĕр кăмрăк бассейнĕнчи шахтăсен коллективĕсем плана яланах ирттерсе тултараççĕ, планран ирттерсе республикăна пиншер тонна çĕр кăмрăкĕ параççĕ.

«Троица» шахтинче ĕçлекен горняксем плана куллен 107—109 процент тултараççĕ. Паллă горняк Новак ертсе пыракан бригада майăн пĕрремĕшĕ тĕлне планран ирттерсе 4 пин тонна çĕр кăмрăкĕ кăларма пулнă. Бригада коллективĕ хăйĕн обязательствине срокчен пурнăçланă. Уяв тĕлне Новак бригади планран ирттерсе тата пин тонна çĕр кăмрăкĕ кăларать.

Апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС).

ООН Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕ

Политикăлла комитетра

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Политикăлла Комитет апрелĕн 20-мĕшĕнче ирхи ларура Бирма правительстви Чан Кай-ши çарĕсем Бирмăна хирĕç агрессилле ĕçсем тунă пирки панă жалобăна сӳтсе явнă.

Малтан çак ыйту тăрăх Йемен представителĕ Шаманди тухса каланă. Бирма представителĕ, тенĕ вăл, Бирма правительстви панă жалоба тĕрĕс пулнине лайăх кăтартса пачĕ, вăл фактсене никам та сирсе яма пултараймасть. Гоминдан бандисен ĕçĕ «тарăхмалла агресси» пулнине палăртса, Йемен представителĕ çапла асăрхаттарса каланă: çакнашкал агрессилле ĕçсене сивлемесен тата чарса лартмасан, çавăн пек хăрушă ĕçсем тата тепĕр хут пулма пултараççĕ, вĕсем пĕтĕм тĕнчери мир ĕçне хăратса тăма пултараççĕ. Ку агресси виçĕ çул хушши пынишĕн тата ку таранччен авторитетлă организаци çак ĕçе чарса лартма хутшăнманнишĕн пăшăрханса, Шаманди çапла каланă: гоминдан бандисен ĕçĕсене чарса лартас тĕлĕшпе Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕ çак бандăсен ĕçне чарса лартаймасан, пĕчĕк çĕршывсем ООН вĕсене хӳтĕлеме пултарассине ĕненсе тăни чылай вăйсăрланнă пулĕччĕ.

Юлашкинчен Шаманди Бирма тăратнă резолюци проекчĕшĕн сасăлама пулни çинчен пĕлтернĕ. Резолюци проекчĕ Хăрушсăрлăх Советне гоминдан бандисен агрессине сивлеме тата çак агрессие халех чарса лартас тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнма сĕнет.

Унтан Совет Союзĕн представителĕ Зарубин сăмах илнĕ. Бирма правительствин жалобине Генеральнăй Ассамблея енчен питĕ тимлĕн пăхса тухни кирлĕ, тенĕ вăл. Хĕçпăшаллă бандăсем Бирма территоринче пулни пĕтĕм Азири мирпе лăпкăлăха хăратса тăрать, мĕншĕн тесен вĕсем Бирма правительствине хирĕç те, Китай Халăх Республикине хирĕç те агрессилле ĕçсем тăваççĕ.

Тайвань утравĕ çинче вырнаçса ларнă гоминдан ушкăнĕ вăрă-хурахла бандитсене хĕçпăшал панине тата вĕсене ертсе пынине палăртса, Зарубин юлашкинчен çапла каланă: Совет делегацийĕ Бирма тăратнă резолюци проекчĕшĕн сасăлать.

Çĕнĕ Зеланди представителĕ гоминданăн хĕçпăшаллă вăйĕсем Бирма территорийĕнче пулни законсăр ĕç пулнине йышăннă. Анчах та вăл çак ĕçе «Пĕрлешӳллĕ Штатсем пулăшнипе» йĕркелеме сĕннĕ.

Индонези представителĕ Палар çапла каланă: гоминдан бандисем Бирмăна хирĕç ку таранччен агрессилле ĕçсем туса пынă çеç мар, халĕ те агрессилле ĕçсем туса пыраççĕ. Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕн, тенĕ вăл, çак агрессие сивлес пулать тата çак районта мир туса хурас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнас пулать.

Таиланд представителĕ: «Бирмăри хирĕçĕве» татса пама Пĕрлешнĕ Нацисен Организацийĕ тивĕçлĕ орган туса хума пултарнă пулĕччĕ, тенĕ.

Польша представителĕ Виневич çапла каланă: Политикăлла комитета тăратнă документсем Чан Кай-ши бандисем Бирма çине тăтăш тапăнни çинчен калаççĕ. Çак бандитсен тискер ĕçĕсем Бирма халăхне пысăк хĕн-хур кӳреççĕ тата Кăнтăр-Хĕвелтухăç Азире мир ĕçне хăратса тăраççĕ. Çакна шута илсе, тенĕ Виневич, Польша делегацийĕ Бирма тăратнă резолюци проекчĕшĕн сасăлать.

Кун хыççăн гоминдановец Цзян Тинфу сăмах илнĕ, Чан-Кай-шипе Бирмăри гоминдан çарĕсем хушшинче нимĕнле çыхăну та çук, тесе вăл каллех тунма хăтланнă.

Иранри ĕçсем пирки

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Тегеранран пĕлтернĕ тăрăх, ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Хосейн Фатеми паян çапла пĕлтернĕ: пăлхава çĕкленнĕ йăхăн çулпуçĕ Аболь Касем-хан Бахтиари влаçĕсене тыткăна парăннă.

Бахтиари майлă тăракансемпе Иран çарĕсем хушшинче нумаях пулмасть тытăçусем пулса иртнĕ.



Болгари Халăх Республики. София хулинче çĕнĕ çуртсем нумай лартаççĕ. Кăçал Болгари столицинче пурăнмалли çуртсем 400 çурта яхăн тата учрежденисем валли 57 çурт лартаççĕ.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: поликлиника валли тăвакан çурт.

Индире миршĕн тăракансен юхăмĕ вăйланса пырать

ДЕЛИ, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Индире миршĕн тăракансен юхăмĕ вăйланса пырать. Юлашки эрнере Уттар Прадеш, Хĕвеланăç Бенгали, Мадхья Прадеш, Андхра штачĕсенче мире хӳтĕлес тĕллевпе массăллă митингсемпе демонстрацисем ирттернĕ. Митингсемпе демонстрацисене хутшăнакан çынсем Корейăри вăрçă ĕçĕсене халех чарса лартма тата пилĕк аслă держава хушшинче Мир Пакчĕ тума ыйтаççĕ.

Делире массăллă митинг пулнă. Ăна Пĕтĕм Индири Мир Совечĕ организациленĕ. Митингра пулнисем Малайăри вăрçа чарса лартма тата Малайя территорийĕнчен ют çĕршыв çарĕсене пурне те илсе тухма ыйтнă.

Митингра тухса калакансем Малайя халăхне хирĕç пыракан вăрçа сивленĕ.

США-ра коммунистсен партине хĕсĕрлеççĕ

НЬЮ-ЙОРК, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед Пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, «сăтăрла ĕçсене тĕрĕслесе тăрас тĕлĕшпе ĕçлекен управлени» тенĕскерĕ решени йышăннă. Çак решени тăрăх, США компартийĕн юстици министрĕ патĕнче регистрацие тăмалла, юстици министерствине компартин мĕнпур членĕсен хушамачĕсене пĕлтермелле тата хăйĕн укçи-тенки çинчен тулли сведĕнисем памалла.

Корреспондент каланă тăрăх, çакă решение суд инстанцийĕсенче пăхса тухмалла, çавăнпа та компарти çак решение пăрахăçа кăларттарасси çинчен апелляци пама пултарать. Корреспондент çырнă тăрăх, Маккарэн законĕ конституцилле ĕç пулни çинчен татăклă постановлени йышăнма США верховнăй судне сахалтан та çулталăк е ытларах вăхăт кирлĕ.

Франци влаçĕсем Тунисра иртĕхеççĕ

ПАРИЖ, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Юманите» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Францин Тунисри генеральнăй резиденчĕ Де Отклок Тунисра пур çĕрте те Май уявĕ ячĕпе демонстрацисем ирттерме чарнă. Де Отклок каланă тăрăх, демонстрацисем каидатсен советне суйлама чăрмантараççĕ пулать.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Демократиллĕ Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ апрелĕн 20-мĕшĕнче çапла пĕлтернĕ:

Иртнĕ кун хушшинче Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсем пур фронтсенче те Американăпа Англи интервенчĕсен тата Ли Сын Ман çарĕсен разведка тăвакан отрячĕсене хирĕç оборонăра тăрса çапăçнă.

Халăх çарĕн зенитнăй артиллерийĕ тата самолетсене хирĕç кĕрешекен салтаксем тăшманăн 6 самолетне персе ӳкернĕ.

Тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене улăштарса илни

ПЕКИН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Кэсонран çапла пĕлтерет:

Паян Корейăпа Китай енĕ, апрелĕн 11-мĕшĕнче йышăннă килĕшӳ тăрăх, тыткăнри чирлĕ тата аманнă çар çыннисене икĕ ушкăн—50 çын репатриациленĕ.

Вĕсем хушшинче: американецсем 30 çын, акăлчансем 12 çын, 4 турок, пĕр канадец, пĕр филиппинец, Кăнтăр Африка çынни тата пĕр грек.

Гоминдан бандисен Бирмăри агрессилле ĕçĕ

ЛОНДОН, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Рангунран пĕлтернĕ тăрăх, Чан Кай-ши бандисем çĕнĕ хĕçпăшал илнĕ хыççăн, Бирмăра Рангунтан 500 километр кăнтăр-хĕвелтухăç енче çĕнĕ фронт уçнă. Ли Ми генерал отрядĕнчи салтаксем пин çын ытла Кокарейкран хĕвелтухăçнерех (Моулмейн портĕнчен 150 километр хĕвелтухăçнерех) Бирмăна пырса кĕнĕ. Вĕсен бази—Месотра (Таиландра, Таиландпа Бирма чиккин леш енче Кокарейкран 25 километрта).

Пĕлекен çынсем каланă тăрăх, Чан Кай-ши бандисем, Бирма правительствин çарĕсем Монг-Сатра гоминдан çарĕсене хирĕç наступлени тунине вăйсăрлатас шутпа, çĕнĕ наступлени пуçласа янă.

Бирма çарĕ, 7 эрне каялла чанкайшистсене хирĕç вăйлă наступлени пуçласа, пысăк района тасатнă, халĕхи вăхăтра вăл Монг-Сат патне çывхарса пырать.

Паян Рангунра илнĕ хыпарсем, тет корреспондент, Кокарейкран темиçе километр хĕвелтухăçнерех (Бирмăпа Таиланд чиккинче) чанкайшистсемпе правительство çарĕсем хушшинче хаяр çапăçусем пынине çирĕплетеççĕ.

Бирмăра акăлчанла тухса тăракан хаçат «Нью таймс оф Бирма» ĕнер çапла пĕлтернĕ: США-н Рангунри посолĕ Себолд Бирма премьер-министрĕнчен У Нуран Чан Кай-ши çарĕсене илсе тухмалла тăвас тĕллевпе вăрçă ĕçĕсене чарса лартма ыйтнă. Хаçат çапла çырать: Себолд премьер-министра Чан Кай-ши çарĕсене илсе тухса каймалла тăвас тĕлĕшпе хăй енчен пулăшма сăмах панă.

Токиора ООН-ăн экономикăлла комисси подкомитечĕн сессийĕ уçăлнă

ШАНХАЙ, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Японири радио пĕлтернĕ тăрăх, паян Токиора ООН-ăн Азипе Инçет Хĕвелтухăç валли тунă экономикăлла комиссин Азипе Инçет Хĕвелтухăç çĕршывĕсен минераллă ресурсĕсемпе усă курас тĕлĕшпе ĕçлекен подкомитечĕн сессийĕ уçăлнă. Сесси ĕçне 20 çĕршыв представителĕсем, вăл шутра Совет Союзĕн, США, Англи, Франци, Голланди тата Инди представителĕсем хутшăнаççĕ.

Сесси Азипе Инçет Хĕвелтухăçĕнчи çĕршывсен минераллă ресурсĕсемпе усă курмалли майсем çинчен тăракан ыйтăва сӳтсе явать.

Ирхи ларура совет представителĕ Варенцов сесси ĕçне хутшăнма Китай Халăх Республикин, Демократиллĕ Корея Халăх Республикин тата Демократиллĕ Вьетнам Республикин представителĕсене чĕнме сĕнӳ панă. Анчах Совет Союзĕн сĕнĕвне йышăнман.

Сесси председательне тата председатель заместительне суйланă хыççăн, кун йĕркинче тăракан ыйтăва сӳтсе явма тытăннă.

Кĕрешсе тĕнчере малти вырăна тухмалли ăмăрту

Совет борецĕсен çĕнтерĕвĕ

РИМ, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Апрелĕн 17-мĕшĕнчен пуçласа 19-мĕшне çитиччен Неаполь хулинче кĕрешсе тĕнчере малти вырăна тухассишĕн ăмăрту пулса иртнĕ. Ăмăрту совет борецĕсем çĕнтернипе вĕçленнĕ. Вĕсем 5 ылтăн медаль, пĕр кĕмĕл медаль, пĕр бронза медаль илнĕ. Пĕтĕмпе совет команди 41 очко илнĕ. Совет командипе урăх нихăш çĕршыв команди те танлашма пултарайман. Швеци спортсменĕсем, 24 очко пухса, иккĕмĕш вырăн йышăннă.

РИМ, апрелĕн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Неаполь хулинче кĕрешсе тĕнчере малти вырăна тухассишĕн пынă ăмăрту вĕçленнĕ. Ăмăртура вырăнсене çакăн пек йышăннă:

Чи çăмăл виçе: пĕрремĕш вырăн — чемпион Гуревич (СССР), иккĕмĕш вырăн—Билек (Турци), виççĕмĕш вырăн—Мевис (Бельги).

Çăмăлрах виçе: пĕрремĕш вырăн—чемпион Терян (СССР), иккĕмĕш вырăн—Ходош (Бельги), виççĕмĕш вырăн—Кокко (Итали).

Çурма çăмăл виçе: пĕрремĕш вырăн—чемпион Андерберг (Швеци), иккĕмĕш вырăн—Триппа (Итали), виççĕмĕш вырăн—Нассан (Ливан).

Çăмăл виçе: пĕрремĕш вырăн—чемпион Фрей (Швеци), иккĕмĕш вырăн—Летонен (Финлянди), виççĕмĕш вырăн—Сафин (СССР).

Сурма çăмăл виçе: пĕрремĕш вырăн—чемпион Шатворян (СССР), иккĕмĕш вырăн—Сильваши (Венгри), виççĕмĕш вырăн— Бенедетти (Итали).

Вăтам виçе: пĕрремĕш вырăн—чемпион Картозия (СССР), иккĕмĕш вырăн—Гренберг (Швеци), виççĕмĕш вырăн—Раухала (Финлянди).

Çурма çăмăл виçе: пĕрремĕш вырăн—чемпион Энглас (СССР), иккĕмĕш вырăн Гродаль (Финлянди), виççĕмĕш вырăн—Рустерхольц, (Швейцари).

Йывăр виçе: пĕрремĕш вырăн—чемпион Антонссон (Швеци), иккĕмĕш вырăн—Коткас (СССР), виççĕмĕш вырăн—Фантони (Итали).

Çĕршывсем çакăн пек вырăнсем йышăннă: пĕрремĕш вырăн—СССР, иккĕмĕш вырăн—Швеци, виççĕмĕш вырăн — Финлянди, тăваттăмĕш вырăн—Итали.

Çăмăл атлетсен 1953 çулхи массăллă кросĕ

ВЦСПС секретариачĕ тата ВЛКСМ Центральнăй Комитечĕ майăн 17-мĕшĕпе июнĕн 1-мĕшĕ хушшинче çăмăл атлетсен 1953 çулхи çуркуннехи массăллă кросне ирттерме йышăннă.

Кроса командăсем хушшинче тата уйрăм çынсем хушшинче мала тухассишĕн предприятисемпе учрежденисенчи, колхозсемпе совхозсенчи, машина-трактор станцийĕнчи физкультура коллективĕсенче ирттереççĕ. Ăмăртусен программине тикĕс мар вырăнта ГТО комплексĕн дистанцийĕсене чупса тухассине кĕртнĕ: хĕрачасем 500 тата 1.000 метр, çамрăксем—1.000 тата 3.000 метр, хĕрарăмсем—500, 1.000 тата 2.000 метр, арçынсем—1.000, 3.000 тата 5.000 метр ăмăртса чупаççĕ.

Кроса çăмăл атлетсен ăмăртăвĕнчи йĕрке тăрăх ирттереççĕ. (ТАСС).

Натуралист блокнотĕнчен

Апрель — çуркуннехи уйăх. Хĕвел кунтан-кун хытăрах хĕртет. Юханшывсем пăртан тасалчĕç.

Йывăçсем папка сарма пуçларĕç, хурăн шывĕ куçма тытăнать, шĕшкĕ чечеке ларать.

Шĕпĕлсемпе кăсăясем иртен пуçласа каçченех юрлаççĕ. Уй-хирте тăри хăйĕн хавасла юррине шăрантарать. Шурă пăрчăкансем вĕçсе килчĕç.

Вăрмансенче çирĕктăрри текен кайăк юрланине, улатакка типĕ туратсене таканине илтме пулать.

Кукăрсăмса кайăк чĕпсем кăларнă ĕнтĕ, вăл чĕпписене хыр тата чăрăш йĕкелĕсен вăррине çитерсе ӳстерет. Çăхан ами те çăмартасем тунă. Халĕ вăл чĕп кăларма ларнă, вырăнтан та тапранмасть. Çăхан аçи ун валли апат тупса килсе çитерет. Мулкач ами хирсенче юр кайса пĕтиччен малтанхи хут çурласа панă. Мулкач çурисене амăшĕ сĕтпе тăрантарать. Çурасем çуралнă хыççăнах чупса çӳреме пултараççĕ. Мулкач ами çурисене пĕр вăхăт хушши тăрантарса пурăнать те çурасене пăрахса каять. Тепĕр 5—6 кунтан тин амăшĕ е урăх мулкач ами çурасене иккĕмĕш хут тăрантараççĕ. Ун хыççăн мулкач çурисем хăйсем тĕллĕн пурăнма тытăнаççĕ, вĕсем ӳсентăран çисе пурăнма пуçлаççĕ.

Вăрман уçланкисене ăсан аçисем пухăнаççĕ. Вĕсем туйлашаççĕ. Хыр вăрманĕсенче, яланхи пекех, шурлăхлă вырăнсенчен инçех мар каракăсем туйлашаççĕ. Карăк — пысăк вĕçен-кайăксенчен пĕри. Унăн йывăрăшĕ 3,5 килограмран пуçласа 7 килограмм таран пулать.

Хĕллехи ыйхăран вăраннă хыççăн пурăçсем, енот йытăсем, упасем хăйсен шăтăкĕсенчен йăраланса тухаççĕ. Упа тата унăн çурисем мĕн тупнă çавăнпа тăранса пурăнма тытăнаççĕ.

Мамăк çăмлă тискер кайăксем çăм тăкаççĕ. Пулăсем те çӳреме пуçлаççĕ. Çарттан вăлча сапма хатĕрленет.

Вăлча сапма Каспи тинĕсĕнчен Атăл тăрăх осетр, белуга, сельдь тата ытти пулăсем хăпараççĕ.

П. ЧУГУНОВ.

„КРАСНАЯ ЗВЕЗДА“ СПОРТ ОБЩЕСТВИНЧЕ

Çĕмĕрле хулинче сĕтел çинчи теннис енĕпе «Красная звезда» спорт обществинче мала тухассишĕн пыракан ăмăрту вĕçленчĕ.

Ăмăртăва 11 çын хутшăннă. Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбинатĕнчи ВЛКСМ комитечĕн секретарĕ В. Грядинский юлташ, 20 очко пухса, ăмăртура пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Вăл пĕр парти те выляса ямарĕ.

Сĕтел-пукан комбиначĕн цех начальникĕ Голиков юлташ, 18 очко пухса, иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

Хĕрачасен ăмăртăвĕнче Москалева юлташ (Çĕмĕрле) лайăх вылянине палăртмалла.

В. МУРАВЬЕВ.

ПĔЛТЕРНИ

Апрелĕн 22-мĕшĕнче, 20 сехетре, КПСС хула комитечĕн библиотека çуртĕнче лекци пулать. Тема: «И. В. Сталин хальхи вăхăтри капитализмăн тĕп законне уçса палăртни тата никĕслени».

Лектор—КПСС Чăваш обкомĕн лекторĕ И. А. Рогоцкий юлташ.

КПСС ХУЛА КОМИТЕЧĔ.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ—апрелĕн 22-мĕшĕнче вырăсла спектакль «Семья». Апрелĕн 23-мĕшĕнче чăвашла спектакль «Нарспи». Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

КИНО

«РОДИНА»—апрелĕн 22-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Ленин в Октябре». 16 сехетре, 18 сехет те 15 минутра, 20 тата 22 сехетре пуçланакан сеанссенче фильм-спектакль «Нахлебник». Апрелĕн 23-мĕшĕнче 12 тата 14 сехетре пуçланакан сеанссенче «Новички на стадионе», ытти сеанссенче «Нахлебник».

«УДАРНИК»—апрелĕн 22-мĕшĕнче «Таинственный беглец».

Халăх демократи çĕршывĕсенче

Малта пыракансем

Кладно—чех горнякĕсемпе металлургĕсен авалхи хули. Чи паха хурçăсене малтан çакăнта тума пуçланă. Ку хула рабочи класс кĕрешĕвĕн традицийĕсемпе те паллă пулса тăрать. Октябрьти Социализмла Аслă революци пулнă хыççăн, Чехословакире малтан çавăнта советсем тунă. Кладно хулинчи рабочисем халĕ те Чехословакири Коммунистсен партийĕн шанчăклă та çирĕп тĕревĕ пулса тăраççĕ.

Кладнори рабочисем шавласа çуйăхмасăр çĕнĕ пурнăç тăваççĕ. Хула çыннисем çакна аван ăнланаççĕ: шахтăсем çинче хĕрлĕ çăлтăр ялкăшма тытăнни—горняксем планран ирттерсе çĕр кăмрăк кăларнине пĕлтерет. Кăссерен пĕлĕтре, кăвак хуппи пек, сарă çутă ялкăшса тăни доменщиксем планран ирттерсе чугун шăратни çинчен калать.

Эпир металлурги завочĕсен Пĕрлешĕвĕнче ĕçлекен Карел Костечка сталеварпа паллашрăмăр. Вăл 1945 çултанпа парти членĕнче тăрать, «Ĕç Орденĕ» ятне тивĕçлĕ пулнă. Буржуази пуç пулса тăнă тапхăрта вăл çирĕм çул хушши мартен кăмаки умĕнче ĕçленĕ, сахал укçашăн лайăх вăй хăпарса тухиччен тăрăшнă. Капиталистсем рабочисене çын вырăнне хуманни, унăн пĕлĕвĕпе талантне курманни Карел Костечкăна çав йывăр ĕçрен те ытларах кӳрентернĕ. Совет Çарĕ унăн тăван çĕршывне ирĕке кăларсан кайнă, халăх хуçа пулса тăрсан çеç, Карел чăн-чăн пурнăçа ăнланса илнĕ.

Карел Костечка — совет металлургĕсен хурçăна хăвăрт шăратмалли меслечĕсене чи малтан вĕренме тытăннă рабочисенчен пĕри.

Çĕнĕ йышши майсем тата йывăрлăхсем новатора пĕртте хăратман. Вăл Совет Союзĕнчи хурçă шăрататакансен меслечĕсене вĕреннĕ, уйрăмах сталинла преми лауреачĕн Михаил Приваловăн меслечĕсене çине тăрсах пурнăçа кĕртсе пынă, çапла вара вăл хурçă шăратас ĕçе чылай хăвăртлатма пултарнă. Хăйĕн ĕçне çав тери хытă юратаканскер, Карел Костечка ĕç тухăçлăхне мĕнле ӳстермеллине заводра пĕрремĕш хут кăтартса панă.

— Эпĕ совет новаторĕсенчен юлас мар тесе тăрăшатăп,— каласа парать вăл.— Вĕсен опычĕ çумне хамăн опыта хушатăп.

Сталевар-коммунист хăйĕн ăсталăхне ытти рабочисене пама тăрăшать, кая юлакан сталеварсене пулăшать, вĕсен тăван çĕршыв умĕнчи ответлăхне ӳстерме тăрăшать. Çакăнта пулать те ĕнтĕ Карел Костечка коммунистăн лайăх пахалăхĕ.

— Мана чап кирлĕ мар,—тет Костечка.— Кашниех ытларах хурçă шăраттăр, пĕтĕм цех мала тухтăр, тесе тăрăшатăп эпĕ. Пирĕн тăван çĕршывăн интересĕсем çапла тума хушаççĕ.

Костечка сталевар заводра хăвăрт та лайăх хурçă шăратма пултаракан сталеварсем сахал мар вĕрентсе ӳстернĕ. Унăн кăмаки халĕ малта пыракан опытпа ытти рабочисене паллаштармалли кăмака пулса тăнă. Ун патне, цеха—малта пыракан опыта вĕренме ытти нумай рабочисем çӳреççĕ. Ун пек ĕçлеме пуринчен малтан коммунистсем вĕренсе çитнĕ.

Цехри парторганизаци председателĕ Вацлав Вшелихал пире çапла каласа пачĕ:

— Костечкăпа цехри ытти сталеварсен пуçарăвĕ сахал мар чăрмавсемпе тĕл пулчĕ. Кая юлнă хăшпĕр рабочисем çак ĕçĕн ăнăçлăхне ĕненместчĕç, çĕнĕлле йĕркесене кăмăлламастчĕç, юлашкинчен тата хăшпĕр инженерсемпе техниксен те кивĕлле ĕçлес туртăм пурччĕ.

Ĕненмен çынсене каласа ăнлантарма, кая юлнă шухăшлă çынсен йăнăшĕсене тăрă шыв çине кăларма тиврĕ. Çак ĕçсене тума пуринчен малтан парторганизаци тытăннă. Коммунистсем кая юлса пыракан рабочисемпе калаçнă, вĕсене усăллă сĕнӳсем панă, кашни çынна тăрăшса, тĕллевне ăнланса илсе ĕçлеме вĕрентнĕ.

— Пирĕн цех коллективĕ те,— тет Вшелихал,—мартен майлах, унта çынсем, шăранса тухнă пекех, улшăнаççĕ.

Акă ĕнтĕ ĕçĕн результачĕ. Иккĕмĕш мартен цехĕ малтанлăха чылай вăхăт хушши юлса пынă пулнă. Халĕ вăл пĕрремĕш вырăнта пырать, планран ирттерсе пиншер тонна хурçă парать. Унта чăн-чăн ĕç мастерĕсем сахал мар ӳснĕ.

Кладнори доменщиксем хăйсен пĕлĕвĕпе ĕçри çаврăнăçулăхне сахал мар кăтартаççĕ. Вĕсен, пĕтĕмĕшне илсен, кивĕ оборудованипе ĕçлеме тивет-ха. Анчах та рабочисен çирĕп вăй-халĕ, хăйсен вăйĕ çине шанса тăни, вĕсем заводсен малашлăхĕшĕн тăрăшни мĕнпур чăрмавсене çĕнтерме май парать. Домна кăмакин горновойĕ Антонин Счастный заводра хĕрĕх çула яхăн ĕçленĕ. Вăл юлашки вăхăтра кăмакана лайăхрах ĕçлеттерес тĕлĕшпе пуçарулла пысăк ĕç тунă, совет доменщикĕсен опытне тăтăшах сарса пынă. Антонин Счастный пире хăйĕн шухăшĕсене каласа пачĕ.

— Шел пулин те,— тет вăл,— пирĕн хушăра мухтанма пăхакан рабочисем те пур-ха. Ун пеккисем вара хăйсен планне тултарнине паттăрла пысăк ĕç вырăнне хума шутлаççĕ. Плана тултармасăр мĕнле пултăр-ха тата? Унсăрăн эпир малалла кайма пултараймастпăр. Пирĕн плана кунтан-кунах тултарса пырас пулать.

Ватă горновой планран ирттерсе темиçешер тонна чугун шăратни кăна мар савăнтарать, ăна хăй çамрăксене вĕрентсе ӳстерме пултарни те хытă хĕпĕртеттерет. Юнашар домнăсем патĕнче ĕçлекен виçĕ горновой—Антонин Счастнăйран вĕренекенсем пулнă.

Доменнăй цехра çитменлĕхсем те нумай-ха. Уйрăмах кăмакасем пĕр пек ĕçлемеççĕ. Парти организацийĕ йывăрлăхсене сирсе яма мĕнпур коллектива мобилизациленĕ.

— Парти организацийĕн пулăшăвĕсĕр,—тет доменнăй цех начальникĕн заместителĕ Поп инженер,— эпир йывăрлăхсене çĕнтерейменпулăттăмăр, çĕнĕ технологие пурнăçа кĕртме те пултарайман пулăттăмăр.

Заводсен Пĕрлешĕвĕн нумай пин çынлă коллективĕ кăткăс та ответлă задачăсене ытларах та ытларах татса парать. Вăл коллектив çĕршыври машиностроени промышленноçне кирлĕ чухлĕ паха хурçă парса тăрать. Заводсем халăх демократи çĕршывĕсем паракан заказсене те ăнăçлă пурнăçласа пыраççĕ. Кладнори заводсене реконструкцилесе, малта пыракан совет техникипе пуянлатса пыраççĕ. Заводсенче çĕнĕ технологипе ĕçлеме вĕренеççĕ, производствăна организацилес ĕç куллен çĕнелсе лайăхланать.

Парторганизаци новаторсене яланах пулăшать, вĕсен пуçарăвне пурнăçа кĕртме шалти вăйсене мобилизацилет.

Коммунистсем ĕç тухăçлăхне ӳстерессишĕн, продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн, перекетлĕхшĕн, технологипе ĕç дисциплинине çирĕплетессишĕн сарăлса кайнă ăмăртăва ертсе пыни—завод коллективĕн ĕçĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать.

— Коммунистсем—яланах малта пыракан çынсем, вĕсем ертсе тата организацилесе пыракан вăй пулса тăраççĕ,—мухтавлăн каласа параççĕ рабочисем.—Вĕсем çĕннишĕн пыракан кĕрешӳре яланах малта тăраççĕ. Вĕсем—социализмла стройăн хастарлă строителĕсем.

Б. ТАРАСОВ.

Прага хули.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01881 Типография № 1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.